1938 ҫ. Январĕн 3 тунтикун 2 (4815)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕп Ĕçтавкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

Редакци адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—55, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Пысăк савăнăçпа кĕтĕмĕр

Социализмла тăван ҫĕршыв сталинла виççĕмĕш пиллĕкҫуллăха кĕчĕ. Ҫĕнĕ ҫула—пин те тăхăрçĕр вăтăр саккăрмĕш ҫула кĕтĕмĕр. Пултарулăхлă ĕçлерĕмĕр иртнĕ ҫул. Рабочисем, хресченсем, служащисем, красноармеецсем, наука, техника тата искусство работникĕсем, Совет Союзĕн мĕн пур ĕççынисем сталинла пултарулăхпа, сталинла хастарлăхпа ĕçлесе тĕрлĕ, ĕмĕрсене курман илтмен ĕçсем турĕç. Иртнĕ ҫул вăл—большевизмăн историре паллă ҫĕнтерÿсен ҫулĕ. Сталинла Конституци ҫĕнтерÿ ҫулĕ, тесе ҫырать декабрĕн 31-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçат хăйĕн ум статйинче. Чăн, иртнĕ ҫул вăл—ҫĕнтерÿ, ÿсĕм, телей, савăнăç, хавхалăх ҫулĕ. Ку ҫул тĕлĕнмелле ĕçсем, ҫитĕнÿсем илсе килчĕ. Ку ҫул ĕçри халăх пултарулăхĕ хăйĕн пур илемлĕхĕпе сарăлса аталанса пынине, промышленноçра та, колхозлă уй-хирсенче те, ҫĕршывăн шахтисенче те, стратосферăра та ĕçлекен ĕçсене илнипе, вăйлă талантсем ÿснине курăнать.

Иртнĕ ҫул ирĕке тухнă ĕçмелĕх [illegible] ҫĕнсе илессипе ҫĕнĕрен пысăк ҫĕнтерÿсем тунипе паллă пулчĕ. Сурçĕр полюсĕнче пирĕн хĕрлĕ йалав вĕлкĕшсе тăрать. Пирĕн паттăр лĕтчиксем—ҫĕршывăн мухтавлă Геройĕсем сурçĕр полюсĕ урлă Европăпа Америкăна сыхăнтарчĕç. Епĕр вĕт кăçал колхозсен ҫĕрĕ аслă уйхирсенче ситмĕ мĕлйард пăтăл тырпулă туса илтĕмĕр.

Пирĕн Совет сынисем вĕт Мускавпа Атăл хушшинче чаплă канал хывса тухрĕç. Совет Союзĕ ҫак ҫĕнтерÿсене пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтанма тивĕç, мухтанать те.

Ленин—Сталин партийĕ халăхăн пултарулă вăйне ҫĕклентерчĕ. ССР Союзĕнче сынсем тăван ҫĕршывăн чи хаклă капиталĕ. Совет сыннисем хăйсен тăван ҫĕршывне чĕрипе, мĕн пур кăмăлтан, вăйнипен хытă йуратаççĕ. Вăл ҫĕршыва вĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр сыхлама хатĕр. Никама та парас сук вĕсем [illegible] илемлĕ тăван ҫĕршывне. Мĕн пур [illegible] пултарулăх совет [illegible] Совет Союзĕнче ҫес [illegible]. Папанин пек хăсар сынсем, Громов пек паллă лĕтчиксем, Пушкин пек чаплă талантлă стахановецсем. [illegible] хăйĕн ҫĕршывне [illegible] йуратакан халăхран ҫес тухма пултараççĕ ҫакăн пек паллă сынсем!

Тĕлĕнмелле хыттăн ÿсрĕ иртнĕ ҫул пирĕн економикăпа культура. Заводсемпе фабрикăсем продукци кăларăмне ÿстерчĕç. Рабочисен, служащисен ĕç укçи хăпарчĕ, колхозниксен тупăшĕ пуйанланчĕ. Ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланчĕ. Шкулсем, университетсемпе, институтсенче [illegible] пычĕ. Халăх культура [illegible] ÿсрĕ [illegible]. Иртнĕ ҫул епĕр вырăссен паллă поечĕ—Пушкин вилни ҫĕр ҫул тултарнине, Грузинсен мухтавлă поечĕ—Шота Руставели ҫурални 750 ҫул тултарнине аса илтĕмĕр. Чаплă уйавсем пулчĕç вĕсем! Вăл уйавсем—совет культурин паха уйавĕсем. Совет гражданĕсем Сталинла Конституцине ҫырнă правасемпе—вĕренÿ, кану прависемпе, пĕлсе усă кураççĕ. Вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ иртнĕ ҫул ÿсрĕ, [illegible] нумайланчĕ, библиотекăсенче кĕнеке илсе вулакансен, киносемпе театрсене сÿрекенсен, кану ҫурчĕсемпе курортсенче канакансен шучĕ пысăккăн ÿсланчĕ. Ҫакă вăл Сталинла Конституцин ырлăхĕ, тивлечĕ.

Иртнĕ ҫул пирĕн халăх большевиксен партийĕ йертсе пынипе ирçĕр тăшмансене—троцкисла-бухаринла ҫĕлен-калтасене таса ҫĕр синчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ҫĕнтерÿсем турĕ. Кивĕ тĕнчен пĕтĕм хура вăйĕ пире ăнсăртран вилĕмлĕ сийен кÿме хатĕрленсе тăнă. Фашиссен агенчĕсем пролетари сучĕ умĕнче каласа панă тăрăх, вĕсем иртнĕ ҫул пирĕн ҫĕршыва вăрçăпа пуçтарса лартма шут тытнă пулнă. Вăрçа хатĕрленнĕ май, фашиссемпе троцкисла-бухаринла бандăсем пĕр кавар тунă, пирĕн ҫĕршыва тĕрлĕ сăтăрла ирçĕр ĕçсем тума шпионсем, диверсантсем йарса тăнă. Ҫак иртĕнсе кайнă сынсем пирĕн ҫĕршыва ушкăнĕпе те такăн-кĕсĕкĕн те фашисла патшалăхсене сутма ĕмĕтленнĕ.

Кивĕ пуснăрлă пурнăçа, капиталиссемпе помещиксене кайала тавăрас тесе, ҫĕнсе илнĕ социализмла ирĕклĕ пурнăçа пĕтерес тесе, вĕсем пирĕн телейлĕ ҫĕршывăн хулисемпе йалĕсене вут-кăварпа пĕтерме шухăшланă. Сталинла Тĕпкомла Совет правительстви тăшмансен вăрттăнлăхне шыраса тупрĕ. Вĕсен [illegible] пурнăçа кĕрейместĕç. Халăх ирçĕр бандăна сĕмĕрсе такрĕ. Совет разведкисем ҫĕнтерчĕç. Империализм патшалăхсен фашисла генеральнай штаб ытларах кĕмĕнчĕ. Совет Союзĕ [illegible] те йаланхи пекех пултарулă ҫĕнтерчĕ. Совет Союзĕ ҫĕнĕ нихăçанхинчен вăйлă.

Иртнĕ ҫул Сталин йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумра каласа тăрăх, пирĕн партине пĕтĕм халăх большевизма вĕренсе пычĕ, тимсĕрлĕхпе хытă кĕрешрĕç, политикăлла сисĕмлĕхе ÿстерсе пычĕç. Сисĕмлĕх—партие тăракан большевиксен ни кирлĕ паха йенĕ пулнă, пулса тăрать, малашне те ҫапла пулĕ.

Халăх активĕн пулăшса пынипе пирĕн партия пур тăшмансене те тăрă шыв сине кăларса, тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе пырĕ. Пирĕн партине пĕтĕм халăхра, рабочи класра пур чи лайăх сынсем кĕрсĕç. Халĕ епĕр пур ҫĕрте те социализмла строительствăра, общăй пурнăçра хăйсен пултарулăхне, партин ĕçне чĕререн йуратса, пĕтĕм вăй-халтан туса пыракан сынсене парти ретне хăпулăн илнипе куратпăр. Пирĕн ҫĕршывăн тÿрĕ ĕçлекен [illegible], партире тăракансемпе партире тăман большевиксен пысăкран та пысăкрах ответлă ĕç пăраççĕ.

Сталинла Конституци пирĕн ҫĕршывăн пурнăçне политикăла сăварну турĕ. Иртнĕ ҫулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче ҫĕнĕ [illegible] Конституци тăрăх [illegible] пирвайхи хут патшалăхăн аслă органне ССР Союзĕн [illegible] Аслă Советне суйларăмăр. Декабрĕн 12-мĕшĕ—1937 ҫулта пур халăх кунсенчен те чаплăрах, мухтавлăрах, паллăрах кун. Ҫак кун мĕн пур 1937 ҫула сути тĕсне вăйлăн сутатса тăрать. Аслă Совета суйлана чухне халăх [illegible] истори, тĕнче курман пĕрлĕхе, пĕр кăмăллине, Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕрленнине, ҫирĕп сыхăнса тăнине. Халăх пурнăçĕнче—аслă Сталина пĕтĕм чĕре-кăмăлтан йуратни [illegible]. Совет ҫĕршывĕн ирĕклĕ гражданĕсем—телейлĕ суйлавсем хăйсен бюллетенĕсене Сталин йышĕнче (урана) йарса, большевикла партипĕн, йуратнă Сталинăн, савăнăçлă, телейлĕ пурнăçпăн, коммунисемпе партийне тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăларĕç. Декабрĕн 12-мĕшĕнче 90 мĕлйун суйлавçă пĕр сасăпа [illegible] тĕнчене илтмеле сасса каларĕ: Епĕр пурте большевиксем пулайăпăр, совет власĕпе, Сталинпа пĕрле!

Декабрĕн 12-мĕшĕ—иртнĕ ҫулăн чи сутă, савăнăçлă кунĕ. ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленсе пыни—фабрик-заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи производствă ĕçĕн тухăçлăхне ÿстерме май пачĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр аслă ҫĕршывăн пур кĕтесĕсенче те ҫак чаплăран та чаплă суйлава производствăри пысăк ҫĕнтерÿсемпе кĕтсе илчĕç. Суйлав умĕнхи производствăри ҫĕкленÿ халĕ стахановла ҫĕнĕ вăйлă йухăма хутшăнса, пĕрлешсе карĕ.

Ĕçхалăх ҫĕнĕ ҫула татах пуйан, татах та пултарулă тăвас кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Савăнать вăл хăйĕн пайанхи ырă пурнăçне кура. Ситес нуп-ҫулĕ унăн татах та чаплăрах, телейлĕрех.

Ҫĕнĕ ҫул йачĕпе, тăван ҫĕршывăм!

Хаклă йулташсем, туссем, хамăрăн аслă тăван ҫĕршывăн ĕççынисем! Совет ҫĕрĕнчи сурçĕрти форпостĕнчен епĕр сире ҫĕнĕ ҫул йачĕпе хĕрÿлĕ сывлăх сунса, ҫĕнĕ ҫулта социализм строительствин пур участкисенче те татах та пысăк ҫитĕнÿсем тума сунатпăр.

Ҫĕнĕ ҫул йачĕпе сывлăх сунние, хĕрÿлĕ йулăшнинче тата парăнса ĕçленине [illegible], хамăрăн пĕрремĕш сăмахсене аслă Ленин пек пурнакан тата ĕçлекен, социализмăн ҫĕнтерÿпĕн пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен телейĕн, савăнăçĕн, мухтавĕн [illegible] аслă Сталин патне йаратпăр.

Тăван Сталин йачĕпе пирĕн аслă социализмла ҫĕршыва мĕн пур ҫĕнтерÿсем сыхăннă. Унăн йачĕпе совет полярниксем хăйсен командирĕ, парти ывăлĕ О. Йу. Шмидт пуç пулса тăнипе Сурçĕр полюсне ҫĕнтерсе илсе, ун ҫине социализм ҫĕнтерне ҫĕршывăн халĕ пăрлă вырăнта вĕлкĕшекен йалавне ҫакрĕ. Унăн йачĕпе пирĕн тăван ҫĕршывăн мухтавлă соколĕсем Чкаловпа Громов йулташсем Мускав — Сурçĕр Америка сывлăш ҫулне хыврĕç.

Ҫĕнĕ ҫула кĕрсе, епĕр хамăрăн йуратнă тăван ҫĕршыва тата тăван сталинла коммунисемпе партине тăманнисен тăванлă союзне ҫирĕплетĕпĕр, халăх тăшманĕсене—троцкисла-зиновйевла ирĕçсене пĕр-хĕрхенÿсĕр тĕпĕ-тымарĕпех тăпăлтаратпăр, политикăла обывателĕсене тăрă шыв ҫине кăларатпăр. Ленин—Сталин ĕçĕсене, халăх вăйне упратпăр тата нумай хут хушатпăр, тесе шантаратпăр.

Хамăрăн ҫĕнĕ ҫулăн пĕрремĕш бокалне епĕр ĕççыннисен телейне туса паракан аслă Сталиншăн—„Ҫĕнĕ ҫул йачĕпе, тăван ҫĕршывăм, хаватлă халăх, Сталин йулташ!", тесе ҫĕклетпĕр.

Експедиципе ĕçлекенсем тата Рудолф утравĕ синче хĕлкаçакансем.

Рудолф утравĕ, йанварĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС).

Ҫĕршыв ҫĕнĕ ҫула савăнăçлă кĕтсе илчĕ

Пирĕн тăван ҫĕршывăн ĕççыннисем ҫĕнĕ 1938 ҫула савăнăçлă кĕтсе илчĕç. Праçник чухнехи пек илемлетнĕ клубсенче, шкулсенче, хĕрлĕ кĕтессенче пысăккисемпе пĕчĕк ачасем те савăнчĕç. Йуратнă Сталиншăн, ҫĕнĕ ҫулти ҫĕнĕ ҫĕнтерÿсемшĕн тост каларĕç. Ҫĕнĕ ҫулти капăр йолкăсем тĕрлĕ тĕслĕ ҫутăсемпе ҫуталса тăнă.

Мускавра Сталин йачĕпе тăракан автозаводăн культура двоpецĕнче ҫĕнĕ ҫула кĕтсе илме рабочисем, инженерсем, служащисем пухăннă. Ҫĕнĕ ҫула нихăçанхи пек те мар савăнăçлă кĕтсе илнĕ. Двоpецăн нумай залĕсенче кинофилмсем кăтартнă, артиссем тухса выляса панă, ҫамрăксем карнавал тумĕсемпе тата маскăсемпе ташланă.

Союзсен Ҫурчĕн Колоннăй залĕ вăйлăн ҫуталса, йалтăраттса тăнă. Кунта столицăри пиншер вĕренекен-отличниксем пысăк йолкă умĕнче выляса савăннă. Кунта ҫамрăксем тĕлĕнмеле тĕнче: пăртан тунă каруçелсене, гротсене, „Папанин палатине", йумахри пек чĕрĕ геройсене курнă.

Украина столицинче операпа балет академилĕ театрĕнче вăйлă бал-маскарад пулнă. Двоpецри пионерсемпе октябрйонoксен вечерĕнче Украина К(б) Парти Тĕпкомĕн секретарĕ Косиор йулташ вĕренÿ отличникĕсене ҫĕнĕ ҫул йачĕпе сывлăх суннă. Паттăрла Испани ачисем совет йолкипе пирвайхи хут паллашнă; Испани пĕчик ачисем йолкăпа тата нумай парнесем панипе питĕ хытă савăннă.

Ҫĕнĕ ҫула чаплă кĕтсе илни ҫинчен ҫавнашкалах Ленинградран, Минскран, Тбилисирен, Алма-Атаран, Совет Союзĕн ытти хулисенчен те пĕлтереççĕ.

(ТАСС)

Стахановецсен ҫĕнĕ ҫулти парнисем

Стахановецсем 1938 ҫула—сталинла виççĕмĕш пиллĕкҫулăхăн пĕрремĕш ҫулне чаплă ҫитĕнÿсемпе кĕтсе илнĕ.

Челйабинскри Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан заводра стахановец Тычев йулташ декабрĕн 30-мĕшĕнче нормăна 13 хут, стахановец Шипиков йулташ 8 хут ÿстерсе тултарнă. Вăл кун уйрăммăн Челйабинскри трактор заводĕн сунтармали аппарат цехĕ лайăх ĕçленĕ. Цехри 336 рабочирен 75 рабочи нормăна 300 процентран 550 процент таран тултарнă. 184 сын нормăна 1,5—2 хут ÿстерсе тултарнă.

Свердловск облаçĕнчи Верх-Исетскри заводра декабрĕн 30-мĕшĕнче мартен кăмакисем питĕ лайăх ĕçленĕ. [illegible] хăйсен нормисене пурте ытлашшипех тултарнă.

Орджоникидзеградри „Красный профинтерн" заводра стахановецсен йышĕ кулленех ÿссе пырать. Заводра нормăна пĕрмайăх 150 пуслаха 300 тата ытларах та процент тултарса пыракансем 6.290 сын шутланать. Декабрĕ уйăхĕнче завод коллективĕ хăй сине 24 мĕлйун тенкĕлĕх палăла туса кăларма обязательство илнĕ. Халĕ вăл обязательствăна пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

„Красный богатырь" завод алă ҫул тултарни

Йанварĕн 1-мĕшĕнче Мускавра, Консерваторин пысăк залĕнче „Красный богатырь" завод аллă ҫул тултарнă йатпа заводри стахановецсен, ватă рабочисен вечерĕ пулса иртнĕ.

„Красный богатырăн" вуникĕ пин сынлă коллективĕ завод аллă ҫул тултарнă йубилейне ĕçĕн пысăк ҫитĕнÿвĕсемпе кĕтсе илнĕ. Завод декабрĕн 18-мĕшĕнче ҫĕршыва 30 мĕлйун мăшăр резинă калуш-пушмак парса ҫулталăкри плана тултарнă.

Вечера М. И. Калинин йулташ пынă. Вечера пынисем пĕтĕм Союз старăстине хĕрÿлĕ кĕтсе илнĕ. М. И. Калинин йулташ „Красный богатырь" рабочисене саламланă.

(ТАСС).

Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнче шкулсем тата культура учрежденийĕсем туни

ХАБАРОВСК, йанварĕн 1-мĕш (ТАСС). Партипе правителствă халăх ҫутĕçĕн ÿсĕмĕшĕн пĕр ывăнмасăр тăрăшни, инçетри нацилĕ районсен культурине ÿстерессишĕн тăрăшни Инçет-Хĕвелтухăçра уйрăмăнах вăйлăн сисĕнет.

Кăçал шкулсем тата культура учрежденийĕсем тума пĕтĕмпе 50 мĕлйун тенкĕ хываççĕ.

Крайра утмăл ытла вăтам тата кĕçĕн вăтам шкулсем тăваççĕ. Ку шута йалти пуçламĕш шкулсем туни кĕмест. Ун пек шкулсем 80—50 ача вырнаçмалăх, Постышев районĕнче — Сан—Чи—Хезăра, Кур—Урмийский районра Джерменре тăваççĕ. Кунта ĕлĕк шкул ҫинчен шухăшлама мар, пичетлĕ сăмах ҫинчен те нимĕн те пĕлмен. Пĕр Камчатка облаçĕнче кăна шкулсем, тăлăх ачасене усрамали суртсем тата ача сачĕсем тума ситчĕ мĕлйун тенкĕ ытла хываççĕ. Пенжено, Евурмей йалĕсенче ҫурçĕрти халăхсен: Евенка, Чукча тата ытти те ачисем валли ҫĕнĕ пуçламĕш шкулсем тăваççĕ. Вăл шкулсем ҫумĕнче тăлăх ачасене усрамали ҫурт пулать. Уст—Большерецкра 480 пин тенкĕ тăракан пысăк социализмла культура ҫурчĕ тата 400 ача вырнаçмалăх вăтам шкул тăваççĕ.

Сахалин ҫинчи Александровскра 100 ача вырнаçмалăх ача сачĕ тума, Виахта йалĕнче куçса ҫÿрекен халăхсен тăлăх ачисен ҫурчĕ тата 1280 ача вырнаçмалăх шкул тума проект тунă.

Ҫамрăклăх хулинче—Комсомольскра ҫĕнĕ шкулсемсĕр, ача сачĕсемсĕр пуçне пысăк библиотека, Владивостокра икĕ мĕлйуна йахăн тенкĕ тăракан пионерсемпе вĕренекен ачасен Двоpецĕ, Амур ҫинчи Николайевскра Ҫурçĕрти халăхсем валли общежитипе педучилище, Йеврейсен Автономлă Облаçĕнче пысăк пединститут тата нумай шкулсем тăваççĕ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăç (Арагони) фронтĕнчи фашисла сарсем Теруел районĕнче 200 самолет, нумай танксем, броньлă автомобильсем тата артиллерилĕ батарейсем [illegible] Декабрĕн 29-мĕшĕнче [illegible] декабрĕн 30-мĕшĕнчи кайăр сапăçсенче фашиссем артиллерипе самолетсен вăйĕ [illegible] Испани республикин [illegible] сакма тунă. Ытти участоксенче фашиссен атакисене сирсе пăрахнă.

Республика авиацийĕ йулашки уйăх кунсенче темиçе хутчен сывлăшра сапăç[illegible] [illegible] тата атаки самолечĕсене [illegible]

ПССЛКС Хĕрлĕ Чутай организацин 9-мĕш конференцийĕ

ПССЛКС Обкомĕ бюровĕ декабрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă решени тăрăх, декабрĕн 25—26-мĕшĕсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи комсомол организацийĕн черетсĕр 9-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ.

Кăçал Хĕрлĕ Чутай районĕнчи комсомол организацийĕ иккĕмĕш хут конференци мĕншĕн иртерме-ле пулчĕ?

Август уйăхĕнче пулса иртнĕ конференцине большевикла самокритика пулман. Райкомол руководствине тăнă халăх тăшманĕсем, хăйсен усал сăнсăпăлесене пытарасшăн пулса, малтанах хатĕрленнĕ. Комсомол пуçламĕш организацийĕсем отчота суйлав пухăвĕнче ĕçри ҫитменлĕхсене тĕплĕн тишкĕрсе тухман. Халăх тăшманĕсем ҫинчен тата вĕсене тăпăлтарса кăларасси ҫинчен витĕмлĕ калаçу пулман. Политикăла вичкĕнлĕхе мăкăтнă, революцилĕ сисĕмлĕхе хавшатнă. Кунсăр пуçне комсомол Обкомĕнчен конференци ирттерме Йашевский килнĕ. Конференцине шанчăксăр сынсем делегатсем те пулса пынă. Ҫавнашкал лару-тăруга конференци большевикла вичкĕнлĕхпе иртме пултарайман. Райкомол ҫĕнĕ составне суйланă чух большевикла сисĕмлĕх пачах пулман. Ҫавăнпа та пленум составне халăх тăшманĕсем те кĕрсе кайма пултарнă (Жемчугов, Лазарев т. ыт. те). Ҫавăнпа та Хĕрлĕ Чутай комсомол организацийĕнче черетсĕр 9-мĕш конференцине ирттермеле пулнă.

Конференцине 75 делегат пухăнмалачĕ. Пурĕ 69 делегат пухăнчĕ. Конференцире пĕрремĕш ыйтупа ПСК(б)П райком секретарĕ Толстов йулташ доклад туса пачĕ. Ун хыççăн 21 сын тухса калаçрĕç. Конференци мĕн пĕтиччен большевикла хастарлăхпа, вичкĕнлĕхпе иртрĕ. Конференци райкомолăн кивĕ составне халăх тăшманĕсем кĕрсе ларса, вĕсем комсомол организацине салатса йарасси патнех ҫитерме тăрăшнине палăртрĕ.

Хăш-пĕр комсомол пуçламĕш организацийĕсем халăх тăшманĕсемпе, йурăхсăр елементсемпе, комсомол ретĕнче тăма тивĕçлĕ мар сынсемпе вараланса пĕтнĕ. Ҫавсем ĕçленипе нумайăш пуçламĕш организацисем (Упукункĕн, Турикасă, Солугин т. ыт. те.) комсомолецсем саланса кайнă, комсомолецсем массăпа ĕçлемеç, большевикла вичкĕнлĕхе ҫухатса ĕçке, хулиганла ĕçе хутшăнса кайнă. Чылай пуçламĕш организацисенче комсомол хуçалăхĕ йĕркеле мар, член укçине вăхăтра тÿлесе пымасçĕ, 2 шер ҫул тÿлеменнисем те пулнă.

Комсомол ретне ĕçре тĕрĕслемесĕр, шанчăклă ҫамрăксене илессине организацилемен. Кăçал пурĕ те 18 ҫамрăка çеç комсомол ретне илнĕ. Хĕрачасенчен пĕр сын та илмен. Ку ĕнтĕ йалти ҫамрăксем хушшинче ĕç пулманнине питех те аван кăтартса парать.

Комсомолецсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçĕ ҫук. Политкружоксем ĕçлемеççĕ. Ҫакнашкалах пионерсем хушшинче ĕçлессине те йухăнтарса йанă. Тĕрлĕрен общеставăлă организацисен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлемен.

Конференци ситменлĕхсене, комсомол организацисен руководствине кĕрсе ларнă халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене уçса пачĕ, комсомол организацисене халăх тăшманĕсенчен тĕпĕ-тымарĕпех тасатса пыма, малашне комсомол ĕçне тĕпренех ҫĕнĕтсе йамали майсене палăртса ҫирĕп решени йышăнса хăварчĕ. Йулашкинчен вăрттăн сасăласа конференци 21 сынран пленум составне суйласа хăварчĕ.

М. Федоров.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Китай сарĕсем тĕп фронтăн кăнтăр тайăкĕнче тапăнса пыма пуçланă. Йапони [illegible] Ханчжоу (Чжецзян провинци столицийĕ) хулисене [illegible] Йапонисем тапăннине чарса тăнă.

Ханчжоуран кăнтăр хĕвелтухăçĕнерех тăракан [illegible] вăйлă сапăçусем пыраççĕ.

Сурçĕр Китайри Йапони сарĕсем [illegible] сапăçнă хыççăн Шаньдун провинцин столицине—Цзинань хулине йышăнса илнĕ. Йапонисем Шаньдун провинцине пĕтĕмпех тытса илме тăрăшса Тайань хули сине [illegible]

[illegible] декабрĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа [illegible] Тайань сине тискеррĕн бомбăсем пăрахать. Ик кун хушшинче декабрĕн 29-мĕшпе 30-мĕшĕнче хула ҫине 700 бомбăран кайа мар пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе 500 йахăн сурт сĕмĕрĕлнĕ [illegible] ытла сын вилнĕ. Йулашки [illegible] тăрăх, Йапони сарĕсем сывлăшран бомба пăрахнипе декабрĕн 30-мĕшĕнче Кантонра 20 сурт сĕмĕрĕлнĕ. [illegible] шкулсем сийенленнĕ. 35 сын вилнĕ.

(ТАСС).

Чан Кай-ши Йапони тăратнă „мир" условине йышăнман

Китай правителствине урăхлатнă

Йутçĕршыв хаçачĕсем Германин Китайри посолĕ Траутман йанварĕн 1-мĕшĕнче Йапони правителстви хушнипе Йапони Китайпа мир тума тăратнă Йапони условине Чан Кай-шине панă. Йапони Китай правителствине: Йапони агреççине хирĕç кĕрешме пăрахма, „коммунисăмпа" кĕрешме Йапонипе тата Манчжоу-гопа килĕшÿ тума хушать. Китайăн паллă вырăнĕсенче, Йапони правителстви суйласа илнĕ тăрăх, Йапони çар гарнизонĕсем тытмала. Çурçĕр Китайри провинцисенче Китайăн тĕп правителствине пăхăнман вырăнти автономлă правителствăсем тумала. Китайăн економикла хуçалăхне йăлтах Йапони хушнă тăрăх туса пымала.

Çапла вара, Йапони тăратнă „мир" условийĕ Китайа хăйĕн нацине никама пăхăнса тăмала мар тăвассишĕн кĕрешме пăрахма, Йапонине пăхăнма, унăн колонийĕ пулма хушать.

Анчах та 400 мĕлйунлă аслă Китай халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнчен Йапони интервенчĕсене йăлтах хăваласа кăларса йаричченех кĕрешме хатĕр. Çакна Китай çарĕсем пур фронтсенче те Йапони çарĕсене хирĕç çине тăрса çапăçни, Йапони захватчикĕсен тылĕнче партизанла йухăм анлă сарăлни лайăх кăтартать.

Англи хаçачĕсем çырса пĕлтернĕ тăрăх Чан Кай-ши Йапони тăратнă „мир" условине йышăнман.

* * *

Китайăн нацилĕ оборона Совечĕ декабрĕн 31-мĕшĕнче правителствăпа генералнăй штабра улшăнусем тăвасси çинчен решени йышăннă.

Чан Кай-шине Ĕçтăвакан Йуан председателĕнчен хăтарнă, анчах вăл Китайăн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандуйушчийĕпе Çар совечĕн председателĕнче йулать.

Правителствăпа генералнăй штаба урăхлатнинче çарта массăлă политикăла ĕçе вăйлатма генералнăй штабăн политик пайне туни паллă вырăнта тăрать.

(ТАСС).

Венгрири троцкиссем гитлеровецсемпе пĕрле

ВЕНА, йанварĕн 1-мĕш (ТАСС). „Нежава" хаçат—Венгрири социал-демократла партин оргăнĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, Венгрири троцкиссемпе Венгрири гитлеровецсем пĕрле ĕçлеççĕ. Венгри гитлеровецсем организациленĕ митингра тăватă троцкист доклад тунă. Венгри фашисĕсем хушшинче троцкис Алфдар Войзгуз паллă вырăнта тăрать, вăл Венгри охранкин агенчĕ пулнине палăртса, ăна тахçанах тăрă шыв çине кăларнă.

Таварлă фермăсенчи выльăхсене браклас йĕрке

Колхозсенчи таварлă фермăри выльăхсене браклас ĕçе халех йĕркепе, ку[illegible] ан-какай хатĕрлев планне тултарасси синчен уйрăммăн чăрăпса. ССРС Çĕр Халăх Комиссарĕ Ейхе йулташ выльăхсене браклассипе апатлантарас ĕçе [illegible] организацилессине тата кĕтÿре ÿстерес [illegible] çĕр органĕсене хушнă.

[illegible] сĕмпе пĕрле, ку ĕçе тума халăх пуçлама-ла, кашни фермăрах выльăхсене суйласа браклассипе [illegible] кĕтÿре ÿстерес [illegible] пулмалла [illegible] мала.

Ан-какай хатĕрлевĕ валли тесе пăлартнă выльăхсене государствăна леççе паричченех вĕсе уйăх малтан ытти выльăхсенчен уйăрса апатлантарма тытăнмала.

[illegible] малала ĕрчетме йурамаи, начар продукцилĕ выльăхсене колхоз правленийĕ хăйех браклаймала. [illegible] выльăхсене браклас ĕçе [illegible] пăйĕн представителĕ те пулмала.

[illegible]

Франци компартин сийесĕ хупăннă

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 30-мĕшĕнче Франци компартин 9-мĕш сийесĕ хупăннă. Сийесăн йулашки ларăвĕнче Димитров йулташ патне йăмали саламлă телеграммăна йышăннă.

Францири компартин членĕсемпе организацисен шучĕ ҫинчен тунă докладра Тĕпком секретарĕ Життон хальхи вăхăтра Францири компартин 341 пин член, 12.992 пуçламĕш организаци, вĕсенчен 4.848 предприйатисенче пулнине кăтартнă. 1936 ҫулта пулса иртнĕ сийес вăхăтĕнче компартин 86.902 член пулнă.

Франци компарти Тĕпкомĕн Аслă секретарĕ Торез хăйĕн сăмахĕнче сийесра 1.123 делегат—рабочи, хресчен, ремесленник тата интеллигенци представителĕсем пулнă тесе каланă. Компарти сийесĕ компарти халăх фрончĕн задачисене пурнăçа кĕртес лозунгпа иртрĕ, тесе каланă Торез.

Сийес партин Тĕп Комитечĕпе Тĕп Контроль комиççине суйланă.

Тĕпкомăн политбюровĕнче — Марсель Кашен, Морис Торез, Жак Дюкло, Марсель Життон, Андре Марти, Гастон Монмуссо тата ыттисем те.

(ТАСС).

Германири фашисла террор

ПРАГА, декабрĕн 31-мĕш (ТАСС). „Дейче Фольксцейтунг" хаçат Эрфурт хулинчи пĕр предприйатире гитлеровецсем фашисла [illegible] 17 рабочийăс ĕçрен кăларса [illegible] ҫинчен сырса [illegible] салтака ытти салтаксемпе [illegible] суд тунă. Салтаксенчен пĕри „Германи вăйлă хĕçпăшаллă" тенине хирĕç „тăхта, куратăн ак, [illegible] тăрăх арканса каяççĕ. Пулăс вăрçа епĕ пулсассăн, епĕ хамăн хĕçпăшала [illegible] хирĕç тăратăп", тесе огетленĕ.

Йăпрăк лум тăвакансем

Сĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕç“ хаçат декабĕрĕн 25-мĕшĕнче „Совет влаçĕн активлă помощникĕсене —корреспондентсене хĕсĕрлекенсене сирĕп ответ тыттармала“ ятлă пысăк статйа пичетлесе кăларнă. Статйа заголовокне вуласан, хаçат хăйĕн ĕçйалкорĕсене хӳтĕлет пулĕ тесе шутламала. Анчах статйара йалкорсене хӳтĕлесси çинчен мар, редакци сотрудникĕ Йавскипе пулнă ĕç çинчен сăмах пырат. Ĕç ака мĕнре:

„Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче, каçхине 9 сехетре „Социалисăмла ĕç“ хаçат сотрудникĕ Петр Йавский йулташ уçалса çӳреме тухнă... Вăл йурласа пыракан ӳсĕр çынсем патне пынă.Ăна Çĕмĕрле комбинатĕнче стоЉарнăй цехра ĕçлекен Василий Терентйев палласа илнĕ. Кăкартан йарса тытса кăшкăрнă. Çапма тытăннă. Анчах ăна хăйĕн йулташĕсемех çапма чарнă, çаптарман“.

Хаçат нумай шухăшласа тăмаст. Вăл тӳрех кулăшла вывăд тăват. „Социалисăмла ĕç“ хаçат Йавскипе декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пулнă ĕç пирки çапла çырат:

„Çак тĕслĕхе районри пур йалкорсене те сӳтсе йавма чĕнетпĕр. Партипе комсомол организацисем тивĕçлĕ вывăд тăвасса шанатпăр“.

Çак вывăд „Социалисăмла ĕç“ хаçат редакцине хăйне кайала çапат. Мĕншĕн тесен, хасат хăй çырнă тăрăхах Йавскине Василйев та, тата унăн йулташĕсем те хĕнемен. Василйев урмашма тытăнсан, ăна хăйĕн йулташĕсемех чарнă. Пирĕн алăра пур свĕденисем тăрăх, Йавский хăйне Василйев хĕнеме хăтланни çинчен районри милици управленине те, районри прокурора та пĕлтермен. Ку ĕç çинчен районри организацисем пĕлмеççĕ. Хаçат хушнă вывăда тумаççĕ.

Хаçат мĕнле вывăд тума хушат? Йавскине хĕнеме хăтланнă тĕслĕхе районри йалкорсем сӳтсе-йавса Василйева тата унăн йулташĕсене хытă айăплама ыйтатпăр тесе резоЉуцисем йышăнмала мар-и? Сакăн пек резоЉуцисем пур пулсан, хаçат ăна пайанах пичетлесе кăларнă пулĕччĕ. Çапла, редакци хаçат хамăр алăра чухне шăнаран слон, йĕпрен лум тума пултаратпăр тесе шутлат пулмала.

Районти организацисемпе йалкорсене тивĕçлĕ вывăд тума хушиччен „Социалисăмла ĕç“ хасатăн çак статйа пичетленнишĕн хăйĕн тивĕçлĕ вывăд тумала.

Çĕнĕрен организациленĕ йалсовечĕ

Пĕтĕм Рассийăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Тӳрхан районĕнчи Липовка йалсоветне икĕ йалсовета уйăрма ирĕк панă.

Липовка йалсоветĕнче çак йалсем йулаççĕ: Липовка, Улйановка, ЉуЉа, Полукирйа. Йалсовечĕн центрĕ Липовка, вăл Тӳрхан райĕçтăвкомне пăхăнат. 1938 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен çĕнĕ йалсовечĕ—Буинск йалсовечĕ пулат. Буинск йалсоветне: Буинск йалĕ, Буинск разйезĕ, Славца рудникĕсем, „Партин 17-мĕш çийеçĕ“ колхоз кĕрет. Йалсовечĕ Йĕпреç райĕçтăвкомне пăхăнса тăрат.

Йĕлчĕк районĕнчи çĕнĕ Пăва магазинĕнче И. Горшковпа И. Бобров йĕлтĕрсем илеççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Вăрнар районĕ тăрăх

Облигацисене алла илчĕç

Районра Ленин, Сталин, Молотов йулташсем йачĕпе тăракан, „Социалисăм“, „Строитель“, „Пĕрлешӳ“, „Апнер“ колхозсем „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели зайома пысăк хаваслăхпа çырăнсаччĕ. Вĕсем ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕ финанс ĕçĕ çинчен йышăннă решенине сӳтсе-йавнă хыççăн, пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмла ăмăртува анлăн сарса йарса, зайом укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç, облигацисене алла илчĕç.

Пысăк тупăш

Хорăнзорти Чапайев йачĕпе тăракан тата Мăн Йавăшри Ленин йачĕпе тăракан колхозсем 1937 çулта агротехникăна вăхăтра пурнăçласа пынипе тата минераллă имçамсемпе тĕрĕс усă курса вăйлă махоркă туса илчĕç. Кашни гектартан 25 центнере йахăн махоркă тухнă. Çапла вара Чапайев йачĕпе тăракан колхоз патшалăха махоркă парса 22 пин, Ленин йачĕпе тăракан колхоз 23 пин тенкĕлĕх тупăш илчĕç.

Лайăх ĕçлекен фермă

Кушникри „Шурăмпуç“ колхозра сысна фермине 1936 çулта организациленĕ. 1937 çулта ферма валЉи ăшă çурт тĕрĕç. Халĕ фермă лайăх ĕçлесе пырат. Йанварĕн пĕрремĕш тĕлне 65 сысна пулмала пулсан, ку плана ытлашшипех тултарнă. Сыснасене колхозри хисеплĕ стахановец Федоров йулташ лайăх пăхат.

Хор кружокĕ организациленĕ

Тӳлукас Мăратри „Комсомолец“ колхоз çамрăкĕсем хор кружокĕ организацилерĕç. Кружокра 15 çамрăк тăраççĕ. Кружока парти кандидачĕ Александров йулташ йертсе пырат.

Шупашкарти хатĕрлев кантурĕнче

— Аха... килтĕн-им-ха,—терĕ телефон умĕнче ӳпĕнсе ларакан управЉайушчи.—Йурат. Питĕ аван. Çырмала. Аха,.. Мĕн-и, е-е е.. суртлă вăрлăх улăштарас ĕç Шупашкар районĕнче мĕнле пырат, тетĕн. Есĕ ку ыйтупа çав аслă бухгалтерпа каласса пăх-ха..

— Аха,—терĕ аслă бухгалтер, умĕнчи хутсемпе пăлхашса:—Епĕ вăл ĕçпе мастăр та мар та.. çапах. Мĕн калас. Кажется, суртлă вăрлăх улăштарас ĕç районра ытлашши çителĕклех пыраймаст пулас. А, между прочим, есĕ ку ыйтупа манăн аслă помощник патне кĕрсе пăх-ха. Вăл çакă йунашар пӳлĕмрех ларат. Калат вăл, калат.

— Аха, ман пата-и?—терĕ аслă бухалтерăн аслă помощникĕ, хăйне хирĕç пукан çине вырăн парса.—Питĕ аван, йурат. Суртлă вăрлăх улăштарс ĕç районра калама çук начар пырат. Мĕншĕн тетĕн-и? Темшĕн начар çав. Хамăрта тĕлĕнетпĕр. Е-ей, статистик, кил-ха кунта?!

Статистик килчĕ.

— Кала-ха пĕр суймасăр,—терĕ ăна аслă помощник.—Суртлă вăрлăх улăштарас ĕç мĕншĕн начар пырат çав пирĕн. Складра суртлă вăрлăх пур. Мĕншĕн ăна колхозсем килсе илмеççĕ, çанталăк сивĕ, теççĕ-и?

— Апла каламаççĕ пулĕ те,—терĕ статистик.—Килеççĕ вĕт. Килеççĕ те, кайаççĕ.

Тĕрĕс калат статистик. Пуринчен те тĕрĕсрех, пĕр пытармасăр, калат. Колхозсенчен, кашни кунах тенĕ пек, лавсем килеççĕ. Хатĕрлевкан урĕн складĕнчен мĕн чухлĕ суртлă вăрлăх илсе каймалине вĕсем пĕлеççĕ. Акă, „Майăн 1-мĕшĕ“ колхозăн 174 центнер илсе каймала, „Социалисăм“ колхозăн 121 центнер, „Осоавиахим“ колхозăн 42 центнер т. ыт. те. Анчах, çук. Хăйсене тивĕçекен вăрлăхсене пайан кунччен те пĕр пĕрчĕ илсе кайман вĕсем... Кайман мар, кайайман. Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесессĕн,—теççĕ кантуртисем,—вăрлăх хатĕр мар-ха пирĕн. Тасатман. Трийер çук.

Колхозниксем ку сăмахпа лăпланмаççĕ. „Çук“ тенине ĕненмеççĕ вĕсем. Апла пулсан, трийер çук пулсан, хамăр илсе килсе паратпăр, теççĕ.

Чăнласах та „Кочаковец“ колхоз хăйĕн трийерне хатĕрлев кантурĕн складне умне килсе лартат.

— Тасатăр хăвăртрах!—тет вăл.—Мĕн чăрмантаратăр. Çитес çуракинче кашни колхоз 100 процентчĕпех суртлă вăрлăх акасшăн тăрăшнине ниушлĕ халĕ те ăнланмастăр?!

— Вара, ăнланатпăр-ха та,—теççĕ кантуртисем.—Халех тасататпăр акă.

Тасатаççĕ. Тасатаççĕ те, каллех колхозран килнĕ лавсене кайала çавăрса йараççĕ.

— Мĕншĕн? Мĕн кирлĕ-ха тата?

— Вара,—теççĕ кантуртисем,—Çĕрĕç халăх комиссариатĕнчен комиссии килмеле. Вара çавă комиççи епĕр тасатнă вăрлăха тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала. Вара тĕрĕслесе тухнă хыççăн, актă çырмала. Вара вăл вăрлăха тин есĕр тийесе кайма пултаратăр.

Çапла „ĕçлет“ Шупашкарти тырпул хатĕрлев кантурĕ. Çапла „ĕçлет“ унăн управЉайушчийĕ Селезнев. Тата хăçанччен çаплах „ĕçлесе“ ларĕ-ши вăл? Хăçан килсе актă çырĕ-ши комиççийĕ? Суртлă вăрлăха хаçан тийесе кайма ирĕк парĕ-ши?

Шупашкар районĕнчи колхозсем çак ыйту çине тахçантанпах тивĕçлĕ ответ кĕтеççĕ.

П Йегорович.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине бӳрократла пăхаççĕ

(Красноармейец çырăвĕ)

Акă камсем ман семйере: 3 йăмăк, иккĕшĕ шкулта вĕренеççĕ, пĕри-пуçламĕш шкулта, тепри—туллимар вăтам шкулта, виççĕмĕшĕ—17 çулта, тата анне.

Анне ман сывă мар. Вăл чирпе нумай асапланса, ĕçе йурăхсăр пулса йулнă. Çавна шута илсе, епĕ килтисене райĕçтăвкома Љготă илме ыйту пама хушса çырса йатăм. Вăхăт нумайах иртмерĕ епĕ килтен çыру илтĕм. Акă мĕн çыраççĕ вĕсем: „анне çакай парас тĕлĕшпе Љготă илес ыйтупа райĕçтăвкома кайрĕ. Райĕçтăвком председателĕ Љготă памала тесе, зайавлени çине резоЉуци хурса парса йанă. Анне ĕçлеме пултарайманни çинчен илнĕ справка çĕтернĕ. Тепре илес тесе боЉницăна кайрĕ. Анчах справкă паман. Аннене операци тăвас пулат теççĕ, тет тухтăрсем. Операци тумасан справка памастпăр теççĕ, тет. Вăл операци тутарма хăрат. Тăлăха тăрса йулăр тесе хăратăп, тет“.

Пурне те паллă, семйене мансăр пурăнма йăвăртарах. Укçа-тенкĕ тупакан çук. Килте пирĕн пĕр сурăх кăна. Урăх выЉăх çук. Çĕрпӳ районĕнче чĕрĕ çынăн ыйтăвĕсем çине çакнашкал бӳрократла пăхни питĕ килĕшӳсĕр. Çĕрпӳ боЉницинче ĕçлекенсем, çынăн сывлăхĕ начаррине кураççĕ пулин те, сывлăх мĕнли çинчен справкă паманни—йĕркесĕрлĕх“ мар-и-ха? Пурна киле тен вĕсем çын вилсен тин справкă пама шутласа хурĕç! „Правда“ хаçат сахал мар унашкал йĕркесĕрлĕхсене хирĕç вирлĕн кĕрешет.

Епĕ хам—Хĕрлĕ çар ĕретĕнче совет çĕршывне сыхласа пурăнатăп. Манăн ĕçлемеле, вĕренмеле, çыхăлăхлă пулмала. Епĕ, „Чăваш Коммунĕ“ хаçатран манăн семйене тивĕçлĕ Љготăсем илме пулăшма ыйтатăп.

Красноармейец А. Иванов.

Тĕрĕсленĕ заметка

Промысла ертелĕнчи сăтăрçăсем

Тӳрхан районĕнчи Липăвкă йалĕнчи промысла ертел правленине сăтăрçăсемпе жуликсем кĕрсе вырнаçнă. Çавăнпа ситменлĕхсем кунран кунах йышланса пыраççĕ. Кунти пуçлăхсем кашни кунах ерех ĕçсе çӳреççĕ, çав вăхăтрах кирлĕ сырйосене çителĕклĕ таран тăратмаççĕ.

Монçейевпа Малышев счетоводсем ӳсĕрпе хĕрарăмсем пурнакан баракă кĕрсе хĕрарăмсенчен темте пĕр усал сăмахсем каласа мăшкăланă. Йулашкинчен чӳрече çĕмĕрсе тухса кайнă. Монçейевпа Малышевăн киревсĕр ĕçĕ çинчен „Демйашина йулташ правленинчи пуçлăхсене пĕлтернĕ те, ăна Монçейевпа Малышев тепĕр хут барака пырса майран пăвнă. Сак ĕçсем çинчен правлени председателĕ Асанов лайăх пĕлнĕ, анчах нимĕн те шарламан.

Смена мастарĕ Кириллов хăйĕн сменинче нихăçан те ытти сменасем чухлĕ стружкă туса кăларайман. Апла пулсан та весовщицă З. Йегоровăна хăйне валЉи 10—12 тӳк ытлашши çырма хушнă. „Çырмастăн пулсан ĕçукçи чакартаратăп, йе выранта кăлартаратăп“—тесе хăратнă.

Çапла вара Йегоровăн ирĕксĕрех кашни кулленех Кириллов бригади çине 10—12 тӳк ытлашши çырмала пулнă. Кунти çитменлĕхсене каласа та пĕтерес çук. „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцинчен пулăшу ыйтатпăр, тесе çыраççĕ ертел членĕсем.

Редакци заметкăна Чăвашвăрманпромсойузне тĕрĕслеме йанăччĕ. Чăвашвăрманпромсойуз, Кондратйев плановик-ревизора вырăна тĕрĕслеме йанă. Кондратйев тĕплĕн ревизи тунă хыççăн, ертел правлени 11 пин тенкĕ растратă тунине тупнă, заметкăра кăтартнисем тĕрĕс пулнă.

Халĕ ревизи пĕтнĕ хыççăн аслă бухгалтер Максимова сăтăрла ĕçлесе пурăннăшăн вырăнтан кăларса сута панă. Правлени председателĕ Асанов, бухгалтер помощникĕ Николайев, склад пуçлăхĕ Малйашкин çинчен уголовлă ĕç пуçарнă. Ĕçе çак кунсенчех йĕрлесе пĕтерсе суда параççĕ.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Государствă шăлти займĕ

Проигрышсăр кăларăм

Пилĕкмĕш тираж

Тираж 1937 çулхи декабĕрĕн 25 тата 26-мĕшĕнче Ворошиловград хулинче пулса иртнĕ.

Таблицăра кăтартнă серисен тата облигацисен номĕрĕсем Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомĕн пур 200 разрйачĕсенче те выЉаса илнĕ.

ВЫИГРЫШ УКÇИНЕ ТӲЛЕНЕ ЧУХ ОБЛИГАЦИ ХАКНЕ ВЫИГРЫШ УКÇИ ШУТНЕ КЕРТСЕ ШУТЛАÇÇĔ.

Таблицăра кăтартнă выигрышсем ... пин тенкĕлĕх облигацисем çине ... 50, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисем ... тенкĕлĕх облигаци пайĕсем пулашкал облигацисен пайĕсем çине выигрыш укçине те иккĕмĕш ... мĕш тата вуннăмĕш пайĕсене тӳлеççĕ.

Пилĕккĕмĕш тиражра проигрышсăр кăларăмри пур 200 разрйачĕсенче серисемпе облигацисен çак номĕрĕсем çине выигрыш т[ухнă]

Серисен №№	Облигацисен №№	Выигрыш тухнă	Серисен №№	Облигацисен №№	Выигрыш тухнă	Серисен №№	Облигацисен №№
00041	1—50	150	07710	1—50	200	14660	1—50
00092	42*)	500	07737	39*)	500	14671	1—50
00174	26*)	500	07744	1—50	200	14741	22*)
00186	15*)	500	07764	19*)	1000	14773	1—50
00788	31*)	500	07783	1—50	200	15027	48*)
00861	18*)	1000	07788	07*)	500	15069	1—50
01187	44*)	500	07975	25*)	500	15319	11*)
01484	17*)	500	08240	42*)	500	15891	1—50
01505	1—50	200	08278	1—50	200	15950	37*)
01512	08*)	500	08619	28*)	500	15999	13*)
01728	08*)	500	08691	1—50	150	16182	36*)
01749	1—50	150	09584	12*)	500	16324	1—50
02004	12*)	500	09546	1—50	200	16398	1—50
02153	23*)	500	09561	1—50	200	16502	1—50
02228	16*)	500	09871	41*)	500	16537	47*)
02336	11*)	500	10136	30*)	500	16589	1—50
02814	1—50	150	10141	04*)	500	16940	32*)
03016	12*)	500	10277	37*)	1000	17048	1—50
03388	1—50	150	10420	1—50	150	17317	1—50
03920	28*)	500	10876	1—50	150	17437	44*)
04408	1—50	150	10948	1—50	150	17477	1—50
04924	1—50	200	11026	1—50	150	17720	1—50
05452	1—50	150	11048	1—50	200	17859	29*)
05481	1—50	200	11142	1—50	150	18061	09*)
05557	01*)	1000	11751	1—50	200	18354	17*)
05655	1—50	150	11804	19*)	500	18612	08*)
06174	1—50	200	12518	42*)	500	18634	20*)
06528	07*)	500	12659	1—50	200	18701	32*)
06830	09*)	500	13355	24*)	500	18905	1—50
06843	1—50	200	13753	1—50	150	19241	04*)
06900	1—50	150	13896	1—50	150	19486	37*)
07113	12*)	500	13913	1—50	150	19607	1—50
07288	1—50	150	14031	16*)	500	19730	1—50
07449	08*)	500	14101	30*)	500	19819	24*)
07611	11*)	500	14446	1—50	150	19852	30*)
						19921	1—50

*) Çак серири ытти облигацисен 49 номерĕсем 150-шар тенкĕ выЉаса ил...

ХРОНИКĂ

Чăваш АССР Аслă Судăн специаЉнăй коллегийĕ, 1937 çулхи сентабĕрĕн 30 мĕшĕнче, ПСК(б)П Кувакино райком секретарĕ пулнă М. Секачова контрреволЉуцилĕ ĕçсем тунăшăн персе пăрахма приговор йышăннă пулнă.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Комитет президиумĕ, Сека[чова] çару ыйтнă тăрăх—персе ... сине улăштарса ăна 20 ... хупмала тата ун хыççăн ... хушши правасемсĕр хă[варма] тунă.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИ...

РСФСР Çăмăл Промышленнăç Халăх Комиссариачĕ

„Роскожснабăн“ тир-сăранпа ату-пушмак промышленнăçне чĕрĕ тавар тăратакан Чăваш республикинчи кантурĕ

„Роскожснабăн“ облăçсем хушшинчи ГорЉкири Бави хăйĕн районсем хушшинчи хатĕрлев пунктисем урлă сăран-ату пушмак промышленнăçне валЉи государствă, кооперативлă организацисенчен, колхозниксенчен тата йединоличниксенчен çаксене сутăн илет:

Чĕркемели чăпта, çĕленĕ чăпта—пур виçелисене те
Сӳçе, чăрăш тата йуман хуппи
Çăка хупĕ
Пыл карасĕ
Курăс кантра-вĕренсем
Курăс
Хурăн хуппи—йапаласем тумали тата тикĕт кăлармали
Тикĕт.

Илĕççе—Чăваш АСС Республикинчи çак хатĕрлев пунктисенче илеççĕ:

Шупашкар хули, Герцен урамĕ, 34.
Канаш хули, Шăхран выçăлки, 63.
Улатăр хули, Горьки урамĕ, 13-б.
Вăрмар станци, Ленин урамĕ, 12.
Йетĕрне хули, КоммунаЉнайа, 78.

Курăс-чăпта тата ытти материалсемшĕн те йышăннă хыççăн укçине çийĕнчех тӳлеççĕ. Хакĕсем организацисем кăтарса пана тăрăх пулаççĕ.

„Роскожснабăн“ Облăçсем хушшинчи Горькири бази

2—2

Чуварлейри туберкуЉозран сыватакан санаторине

СЫВАЛМА КАЙМАЛИ ЙĔРКЕ

Чăваш республикĕнчи Сывлăха сыхлав Халăх комиссариачĕн Чуварлейри туберкуЉоз санаторийĕ

Ӳпкен туберкуЉозлă уçă тата хупă формипе чирлекенсем валЉи санатори çулталăк хушшипех ĕçлет.

Санатори хыр вăрманне вырнаçнă, типĕ, çил пыман вырăнта.

Санаторинче çак майсемпе чирсенчен сыватаççĕ—кефирпа, кумыспа, искусствăлă пневматорокспа. Ӳнтах рентген тата лаборатори пур.

Хăйĕн врачĕсемсĕр пуçне, çак кунсенчех Хусанти пысăк квалификацилĕ консуЉтантсем санаторинче ĕçлеме пуçлаççĕ.

Санаторине çитмели йĕрке:

1. Санатори Хусан чукунçулĕн Улатăр станцинчен çичĕ километртра вырнаçнă.
2. Станцинче санаторин представителĕ пур.
3. Улатăр станцинчен санаторине çитиччен автомашинă çӳрет.

ТуберкуЉозăн çак формисемпе санаторине йараççĕ.

Ӳпкен туберкуЉозлă уçă тата хупă формисемпе, II А, III А, II В, III В—компенсированнăй тата супкомпенсированный йĕркелисене сыватаççĕ.

Çак формăлисемпе санаторинче йышăнмаççĕ

1. II С, III С туберкуЉозăн декомпенсированнăй формилисене, температура 38 градус ытла, интоксикаци пулсан;
2. Ӳпке туберкуЉозĕ пыршăна, хырăма, пӳрепе, пыра хутшăнса саралса кайнă пулсан;
3. Шăмă, шăнăр тата железа туберкуЉозĕпе;
4. Чĕрĕсем органически чирленипе;
5. Тытса пыракансене, ухмаха йерисене, нервă системин органически тата функционаЉнăй йĕркипе чирлисене;
6. Саракан тата ӳт-тир чирĕсемпе чирлекенсене.

Санаторие курорта йарас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи пăхмасăр, туберкуЉоз диспансерĕ пăхмасăр санаторине илмеççĕ.

Çакăнта кăтартнă йĕркесем туберкуЉозпа чирлекенсене санаторине сывалма йамашкăн пур врачсен ĕçĕнче те руководствă пулса тăмала.

Çак ĕçре ĕçлекен врачсем туберкуЉозпа чирлекен çынсене лайăх пĕлни, вĕсен формисене тĕрĕс кăтартни санаторинче ĕçлекен врачсен ĕçĕнче пысăк пулăшу парат.

Санаторин аслă врачĕ Л. СКВОРЦОВ.

1938 çулшăн „Чăваш Коммунĕ“ Издательстви кăларакан Йумăрпа сатирă журналне „КАПКĂН“ сырăнтарасси халĕ те пырат

Журнал чăвашла, уйăхра пĕрре тухса тăрат.

Пĕр номĕрĕ 40 пус
Ултă уйăха 2 т. 40 пус.
Çулталăка 4 т. 80 пус.

ПОЧТАЉЙОН!

Подпискăна çурçуллăха, çулталăклăха тухма тăрăш.

Журнал сарас тата ăна вăхăтра çитерес пата тăрăшăн ĕçле.

„Капкăн“ редакцийĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 27-мĕшĕнче ... Лаша тарнă. Тĕсĕ сарă çӳрен, çилхи сылтăм йен... çулĕш 131 сант.

Çак адрĕспе пĕлтермеле: Сĕнтĕр[вăрри] районĕ, „Хастар“ колхоза.

Академи театрĕнче Йанварĕн 3-мĕшĕнче Вырăсла спектакЉ Шиллер „КОВАРСТВО И ЛЮБОВЬ“ (4-пайлă мещанла трагеди) Аслă режиссĕр Г. В. СТРАНСКИ лартат. Талон № 71. Абонемент № 3. Талон № 9.

„Чăваш Коммунĕ“ сырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита ... Гос. Чебоксары, Типография № 1 Чувашского ... Заказ № 2370. Тираж 16790. 53—52 см ...

Йалхуҫалӑх ӗҫӗнче ӗҫлекенсен районти канашлӑвӗ

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корреспондентран). 1937-мӗш ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗн итогӗсемпе 1938-мӗш ҫулта умра тӑракан задачӑсем ҫинчен сӳтсе-йавма пухӑнӑ районти колхозник-стахановецсемпе ударниксен тата специалиссен канашлӑвӗнче 500 ҫын йахӑн пулчӗ.

Ку мӑтупа Носков йулташ доклад туса панӑ хыҫҫӑн, уйрӑм колхозник-стахановецсем хӑйсен ӗҫӗсемпе задачисем, шухӑшӗсемпе ӗмӗчӗсем ҫинчен тухса каларӗҫ.

Чӑн малтанах Кӑмашари „1-ое мая)" колхоз председателӗ, орденоносец Толстов йул. сӑмах илет. Вӑл 1937-мӗш ҫулта колхозӗнче пулнӑ ҫитменлӗхсемпе ҫитӗнӳсем ҫинчен калат.

Ун хыҫҫӑн „Красноармеец" колхоз председателӗ Горйунов йул. сӑмах илет.

— Пирӗн 1938-мӗш ҫулта Сталин йулташ каланӑ сӑмаха пурнӑҫласишӗн, ҫулталӑкра 7—8 мӗлйард пӑт тырӑ туса илессишӗн кӗрешмеле,—тет Горйунов йулташ.—Пирӗн колхоз 1938 ҫулта гектартан 120 пӑтран кайа мар тӗш тырӑ туса илме обйазательствӑ илет, йӗтӗн сӳсӗ 10 центнертан кайа мар илме пулатпӑр. Ӑна пурнӑҫлама, епӗр 20 пин лав тислӗк, 2 пин лав торф, кӳл тӗпӗ, тата кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ уйа кӑларатпӑр. Пайанхи куна епӗр 5 пин лав тислӗк, пӗр пин лав торф, кӗл пухнӑ та ӗнтӗ. Вӑрлӑхсене лайӑххӑн суртлатпӑр,—тет Горйунов йул.

Ласковенков („Подборный" колхоз), Герасимов (Хутар), Моисеев („Комбинат" колхоз), Михайлов („Красный Октябрь"), Самсонов, (Турхан), Горбатова („Бол̧шевик" колхозри колхозницӑ-ударницӑ) т. ыт. те хӑйсен колхозӗсем 1937-мӗш ҫулта йепле ӗҫлени ҫинчен каласа, 1938-мӗш ҫулта татах та лайӑхрах ӗҫлеме обйазательствӑсем илчӗҫ.

Йулашкинчен, ССР Сойузӗн Аслӑ Совет депутачӗ, ПСК(б) Парти Ҫӗмӗрле райкомӗн секретарӗ Новиков йулташ тухса сӑмах каларӗ. Вӑл уйрӑмӑнах хӑйӗн сӑмахӗнче колхозсен умӗнче тӑракан задачӑсем, ҫав задачӑсене мӗнле пурнӑҫламали ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ.

— Мака-Аслӑ Совет депутатне суйларӗҫ. Епӗ, йулташсем [illegible] ҫирӗппӗнех ҫакна [illegible] калатӑп: партине правительствӑ хушнӑ ӗҫсене тӳррӗн, пӗтӗм вӑйа хурса пурнӑҫласшӑн кӗрешетӗп.

— Пирӗншӗн йавӑрлӑх ҫук, епӗр пурне те тума пултаратпӑр, вӑй хурса ӗҫлени, тӑрӑшни ҫеҫ кирлӗ. Айтӑр, йулташсем, 1938-мӗш ҫулта михҫӑн туса илмен тухӑҫлӑ тырпул туса илер, уншӑн кӗрешӳве тухар,—терӗ Новиков йулташ.

Канашлу 1938-мӗш ҫулта ӗҫлеме татӑклӑ обйазательствӑ илсе, социалисӑмла ӑмӑртӑва Хӗрлӗ-Чутай районне чӗнчӗ. Ҫавӑн пекех канашлу Ҫӗмӗрле районӗнчи колхозниксемпе стахановецсене, йалхуҫалӑх ӗҫӗнче ӗҫлекенсене пурне те чӗнсе ҫыру ҫырчӗ.

(Ҫӗмӗрле районӗнчи колхозник-стахановецсемпе ударниксем тата йалхуҫалах специалисӗсем Ҫӗмӗрле районӗнчи колхозниксемпе йалхуҫалах специалисӗсене чӗнсе каланинчен)

Епӗр, Ҫӗмӗрле районӗнчи колхозник-стахановецсемпе ударниксем тата йалхуҫалӑх специалисӗсем канашлӑвне пухӑннисем ҫакна палӑртатпӑр: коммунистсен партийе унӑн ҫулпуҫӗ аслӑ Сталин йулташ тӗрӗс йертсе пынипе пирӗн ҫӗршыв социалисӑм строительствин пур фрончӗсенче те пысӑкӑн пулман ҫитӗнӳсем турӗ.

Икӗ пйатилеткӑ хушшинче пирӗн ҫӗршыв социалисӑмла хӑватлӑ державӑ пулса тӑчӗ. Нумай нацилӗ Совет Сойузӗнчи пӗтӗм халӑх савӑнӑҫлӑ, пуйан та кул̧турӑлӑ пурӑнат.

Колхоз стройӗ пӗтӗмӗшпе тата тӗппипех ҫӗнтерчӗ. ССР Сойузӗ чи пысӑк, социалисӑмла шултра йалхуҫалӑхлӑ ҫӗршыв пулса тӑчӗ.

Колхозсемпе совхозсем чи малти техникӑпа хӗҫпӑшалланчӗҫ. Колхозсемпе совхозсен уйӗсенче ҫӗршер пин тракторсемпе комбайнсем т. ыт. йалхуҫалӑх машинисем ӗҫлеҫҫӗ.

Хуҫалӑхра социалисӑмла системӑ ҫӗнтернӗ май, тырпул тухӑҫлӑхӗ те нумай ӳсрӗ. Тырӑ, кӑшман, йӗтӗн, ҫӗрмамӑкӗ, кантӑр т. ыт. йалхуҫалӑх продукчисем туса илесси революцичченхи вӑхӑтпа танлаштарсан темиҫе хут ӳсрӗҫ.

Пирӗн Ҫӗмӗрле районӗнче те йалхуҫалӑхӗ хӑвӑрттӑн ӳссе пырат. Тырӑ тухӑҫлӑхӗ 2 хут ытла ӳсрӗ. Пур колхозра та таварлӑ выл̧ӑх-чӗрлӗх фермисем органицилене. Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илекенсемпе выл̧ӑх-чӗрлӗх ӗрчетессишӗн ырми-канми ӗҫлекенсем пиншерӗн ӳсрӗҫ. „Красноармеец" колхоз 95 гектар ҫинчен йӗтӗн сӳсӗ 8-шер центн. туса илчӗ. Вӑл шутран 4 гектар ҫинче 10-шар центнер илчӗ. „Бол̧шевик" колхоз кантӑр гектартан 8-шар центн., „Коминтерн" колхоз клевер вӑрри гектартан 4-шер центн. туса илсе патшалӑха 100 пӑт ытла сутрӗ. Клевер вӑрри сутса „Коминтерн" колхоз 10 пин тенкӗ ытла тупӑш илчӗ.

Йалхуҫалӑх ӗҫӗнчи уйрӑм стахановецсем 1937 ҫулта, социалисӑмла ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Чекменева орденоноскӑ 95 гектар ҫинчен 8-шар центн. йӗтӗн сӳсӗ туса илсе, патшалӑха памали плана 150 проц. ытла тултарчӗ. „Красноармеец" колхозри колхозницӑсем: А. Репнова. Д. Саланова, М. Саланова кӗлте сыхнӑ чухне нормӑсене 300 проц. тултарса ӗҫлерӗҫ. „Новая жизнь" колхозри Храмова колхозницӑ тырӑ вырассипе 400 проц., „Ударник" колхозри Талмакова кӗлте сыхассипе—300 проц. „Красноармеец" колхозри М. Саушин машинӑпа вырса ӗҫ нормине 150 проц. тултарса ӗҫлерӗҫ. Савӑн пекех Йемелйанов („Вож[illegible]" колхоз) суха ӗҫӗнче 200 процент, И. Логинов [illegible]—250 проц. тултарса ӗҫлерӗ. „Канаш" колхозри сысна фермине ӗҫлекен А. Долгова кашни сысна аминчен 15-шер ҫӑвӑр, хӑшпӗр сыснаран 24 ҫӑвӑр илнӗ.

Пирӗн районти колхозсем патшалӑх умӗнчи обйазательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫларӗҫ. Халӗ колхозсем вӑрлӑх фондне чи лайӑх тырӑ уйӑраҫҫӗ.

Стахановла йухӑма вӑйлатса пынӑ май кашни сулах ӗҫкунӗ пуҫне тивекен виҫе хӑпарат.

Ҫӗрӗҫ халӑх комиссариатӗнче тата районта та халӑх тӑшманӗсем пирӗн социалисӑмла хуҫалӑхра сӑтӑр туса пыман пулсан, пирӗн ҫитӗнӳсем татах та пысӑк пулмалаччӗ.

Краснодар крайӗнче тракториссемпе комбайнерсем чӗнсе каланине тата Чӑваш Обкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен йышӑннӑ постановленине сӳтсе-йавнӑ май, епӗр йалхуҫалӑх ӗҫӗнчи стахановецсемпе ударниксем тата специалиссем ҫуракине кӑтартулӑ хатӗрленессине тата 1938 ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗнче тимлӗн ӗҫлесе, ӑна кӑтартулӑн вӗслеме, нумай тухӑҫлӑ тырӑ туса илме, социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, хамӑр ҫине ҫакӑн пек обйазательствӑсем илетпӗр:

1. 1938 ҫулта пур колхозсем тӑрӑх та гектартан тырӑ 100 пӑтран кайа мар, йӗтӗн сӳсӗ—6 центн., йӗтӗн вӑрри—6 центн., кантӑр сӳсӗ—7 центн., ҫӗрулми — 200 центн., клевер вӑрри— 3 центн., тымарҫимӗҫсем 400 центнертан кайа мар туса илмеле.

2. Пӑрусене лайӑх пӑхса илес, кашни сыснӑ аминчен 10 ҫӑвӑртан кайа мар илме пулатпӑр, кашни ӗнерен вӑтам шутпа 1700 литр сӗт илме. Хурт-хӑмӑр семйисене 50 проц. ӳстерес. Кашни вӗллерен 32 килограм пыл илмеле.

Ҫаксене пурнӑҫлама епӗр ҫакӑн пек ӗҫсем тума пулатпӑр: вӑрлӑхсене йанварӗн 15-мӗшне улӑштарса пӗтерме пулатпӑр, вӑрлӑхсем пӑтнине пӗррӗмӗш хут йанварӗн 15-мӗшне, иккӗмӗш хут мартӑн 1-мӗшне тӗрӗслесе тухатпӑр. Акмали вӑрлӑхсене чи лайӑх пӗрчӗсене уйӑрса, уйрӑм амбарсенче усрама пулатпӑр. Вӗсем мӗнле тӑнине йалалах тӗрӗслетпӗр. Вӑрлӑх участкисене акма 1500 центнер алӑпа суйлатпӑр. Йалхуҫалӑх машинисене, лаша таврашӗсене хатӗрлесе хуратпӑр. 65 пин лав тислӗк кӑларса купасем туса хуратпӑр. 450 центн. кӗл, 700 пин лав фекали, 1000 центн. кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 8000 тоннӑ торф, 500 тоннӑ компост пухса хатӗрлетпӗр. 2000 гектар ҫӗр ҫине йаровизациленӗ вӑрлӑхпа акатпӑр. Вӑрлӑхсене пӗтӗмӗшпех протравит тӑватпӑр. 1200 гектар мул̧чировани, 370 гектар ҫинче нитрагинизаци тӑватпӑр. Вӑрлӑхлӑх акнӑ клеверне кӗрхи тырӑ калчисене 50 проц. кайа мар сӳреллетпӗр. 2500 гектар ҫинче калчасене апат паратпӑр—кӗрхи тулӑна 1000 гектар. техникӑлӑ кул̧турӑсене 100 процентчӗпех. 720 тоннӑ минераллӑ удобренисем илсе килме, 3200 гектар ҫинче йур тытма пулатпӑр.

11 ретлӗ акмали машинӑпа 60 гектартан кайа мар, 13 ретлӗ акмали машинӑпа 70 гектартан кайа мар акма нормӑ йышӑнатпӑр.

3. Кашни колхозрах пур кул̧турӑпа та вӑйлӑ тырпул звенисем тӑватпӑр.

4. 1938 ҫулта кашни колхоз акмали ҫӗр лаптӑкӗнчен 30 процентне ҫемҫетме задачӑ лартатпӑр.

5. Вӑйлӑ тырпул звенисем вал̧л̧и участкӑсем уйӑрнине пӗрлех, вӑрлӑх участкисен ҫӗр лаптӑкне те февралӗн 1-мӗшне ҫитиччен уйӑрса хума пулатпӑр.

6. ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйланӑ чух ӗҫсынисен политикӑла тата производствӑла хастарлӑхӗ ӳснипе пӗрле ҫуракине хатӗрленнӗ май, йединоличниксене колхоза ҫӗрлештерес ӗҫтӑва массӑлӑ ӑнлантарулӑ ӗҫпе сыхӑнтарса пымала.

7. Кадӑрсем хатӗрлес плана пурнӑҫлас шутпа йанварӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа пур колхозсенче те агротехникӑла вӗренӳве пуҫарса йарса, ҫав кружоксене пур сухаҫӑсене, акакансене, сӳрекенсене пурне те вӗренӗве йавӑҫтарас.

8. Выл̧ӑхсене лайӑх пӑхассине органицилемеле.

9. Вӑрман хатӗрлес плана пурнӑҫлама пур колхозсене те хутшӑнтарас. Вӑрман хатӗрлес плана срукчен тултарас.

Револ̧уцилле бол̧шевикла сисӗмлӗхе татах та вӑйлатар. Троцкисла-зиновйевла, бухаринла-рыковла бандитсене, фашисӑмӑн разведкисене, халӑх тӑшманӗсене тӗппипех пӗтӗрер.

Хамӑрӑн коммунисла партийе хамӑр ҫулпуҫ, учител Сталин тавра татах та тачӑн пӗтӗҫер.

Совет халӑхӗн ҫирӗплӗхне коммунистсемпе партире тӑманнисен никам ҫӗнтереймен блокне татах ҫирӗплетер.

1938 ҫулта кайа йулса пыракан колхоз пулмала мар. Кашни гектартан 100 пӑтран кайа мар тырӑ илессишӗн социалисӑмла ӑмӑртупа стахановла йухӑма нихҫанхинчен анлӑ сарса йарар.

Сывӑ пултӑр пирӗн социалисӑмла тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр ЦСК(б) Партийӗ!

Сывӑ пултӑр массӑлӑ стахановла йухӑм!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫулпуҫ, учител Сталин йулташ!

Мухтавлӑ нарком

(Йурӑ)

Пӗр вӗҫӗмсӗр аслӑ
Совет ҫӗрӗнче
Саланчӑ мухтавлӑ
Хыпар сан ҫинчен.
Уйхирӗ, вӑрманӗ,
Колхозлӑ сала,—
Пурте саламлаҫҫӗ,
Йежов, хал̧ сана.

Мухтавлӑ та чаплӑ
Хӑйула чекис,—
Ес—пирӗн мухтавлӑ
Ҫӗршыв чечекки.

Ӗҫ халӑхӗн ывӑлӗ
Сават ҫӗршывне.
Ес пирӗн ҫӗршывӑн
Мӗн пур тӑшманне
Куратӑн пит витӗр
Чекис куҫӗпе,
Тытан та кӑклатӑн
Ӑна тымарпех.
Мухтавлӑ та чаплӑ,
Хӑйулӑ чекис,
Йалан ҫирӗп пултӑр
Ҫӗршывӑн чикки.

М. Ӊамаӊ.

Куславкка комбинатӗнчи рамшчик стахановец Алексей Макарович Осин. Вӑл комбинатра 1929 ҫултанпа ӗҫлет. Ӗҫ нормине иртерсе тата пысӑк пахалӑхпа тултарат.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Ушӑр бригадирӗсемпе опытниксен, стахановецсемпе ударниксен районри сл̧очӗ

ВӐРНАР (Хамӑр корр.) Декабӗрӗн 29-мӗшӗнче колхозсенчи ушӑр бригадирӗсемпе опытниксен, стахановецсемпе ударниксен районри сл̧очӗ пуласа иртрӗ. Пурӗ 200 ҫын пулчӗҫ. Сл̧от 1937 ҫулхи йалхуҫалӑх ҫулӗн итогӗпе 1938 ҫулхи ҫуракинӗ хатӗрленӗс ӗҫӗн задачисем ҫинчен сӳтсе-йаврӗ.

Сталин йулташ ҫулсерен 7—8 мӗлйард пӑт тырӑ илмеле тума чӗнсе каланине хапӑл тусах йышӑннине колхозсем вӑйлӑ тырпул туса илес ӗҫре кӑтартрӗҫ. 1937 ҫулта, вӑтамран илсен, районри колхозсем гектартан 100 пӑт тӗштырӑ туса илнӗ. Уйрӑм колхозсем 150-шер пӑт та илнӗ. Кол̧цовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхоз вӑйлӑ тырпул туса илессипе районри пур колхозсене те лайӑх тӗслӗх кӑтартрӗ. Колхоз гектар пуҫне вӑтамран 180-шар пӑт тырӑ туса илнӗ. Хӑмӑшри „Ҫамрӑк колхозник" колхоз гектар пуҫне вӑтамран 144 пӑт, Ленин йачӗпе тӑракан колхоз 132 пӑт илнӗ.

Вӑйлӑ тырпул туса илес ӗҫре уйрӑмӑнах колхозсенчи уйрӑм бригадӑсемпе звеносем пысӑк вырӑн йышӑннине курма пулат.

Акӑ, Кол̧цовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозри Талайев йулташ бригади 54 гектар ҫинчен „Диппе" суртлӑ сӗлӗ гектар пуҫне вӑтамран 344 пӑт, Храмов йулташ бригади 18 гектар ҫӗр ҫинчен ҫурхи тулӑ гектар пуҫне вӑтамран 305-шер пӑт, „Ҫамрӑк колхозник" колхозри Мартынов йулташ бригади гектартан тулӑ 174 пӑт, 3 гектар ҫинчен унӑн бригадийех 198-шар пӑт тулӑ туса илнӗ. Ленин йачӗпе тӑракан колхозри опытниксем Храмкин йулташ ӗҫленӗ ҫӗр ҫинчен гектар пуҫне 162 пӑт тулӑ илнӗ.

— 1931—35 ҫулсенче епӗр ӗҫ хисепӗшӗн ҫеҫ тӑрӑшнӑ, ӗҫ пахалӑхӗшӗн тӑрӑшман. Ҫавӑ вӑл вӑйлӑ тырпул туса илес ӗҫре чылай чӑрмантарнӑ та. Вӑйлӑ тырпул туса илесси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Агротехникӑна ҫаврӑса илсе уншӑн кӗрешме пӗлмеле. Ҫавӑнпа та епӗр чи малтанах вӑйлӑ тырпул туса илессине агротехникӑна вӗреннинчен тытӑнтӑмӑр. Вӑйлӑ тырпулшӑн епӗр кӗркуннех кӗрешме тытӑнтӑмӑр. Сентӑбӗр уйахӗнче кӗр сухине 22 сантиметр тарӑнӑшӗ сухаласа хӑвартӑмӑр, ҫӗре ҫителӗклӗ таранах тӗрлӗ майсемпе ҫемҫертӗмӗр, вӑрлӑхсене виҫ хут машинӑ витӗр кӑларнӑ тата ыт. те. Ҫаксем ӗнтӗ пурте вӑйлӑ тырпул туса илме пулӑшрӗҫ. Ӗҫкунӗ пуҫне 13,5-шер килограм тырӑ тиарӗ,—тет Сталин йачӗпе тӑракан колхоз бригадирӗ Талайев йулташ.

— Булатово ҫӗрӗ хӑйарла. Лайӑх пулсан ҫулта пирӗн йал гектар ҫӗр ҫинчен 40 пӑтран ытла тыра туса илеймен. В[illegible] тырпул тусӑ илесси, паллах, ӗҫлемес[illegible] пулмасӑ. Чи малтан агротехникӑна [illegible] ренниччен тытӑнас пулат. Колхоз [illegible] ҫулта вӑтам шутпа гектар ҫӗр ҫинчен [illegible] пӑт, уйрӑм участкӑсем ҫинче 180-шар [illegible] тырӑ илчӗ. Ҫакнашкал тухӑҫ илесси[illegible] епӗр 1936 ҫулхи кӗркуннех ӗҫлеме тыт[illegible]тӑмӑр. Ҫуракинче акмали ҫӗре 100 [illegible] ценчӗпех кӗр сухи туса хӑварнӑ. У[illegible] пин лав торф, 2 пин лав тислӗк кӑлар[illegible] минераллӑ ҫӑнӑхсене 3 пин тенкӗлӗх [illegible] ҫӗре апатласа хӑварнӑ ыт. те тунӑ,—[illegible] Булатово колхоз бригадирӗ Михейев.

1938 ҫулхи ҫуракине хатӗрленесси ҫ[illegible]чен Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗ[illegible] Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ йышӑ[illegible] постановленине колхозниксемпе колх[illegible]ницӑсем хушшинче сӳтсе-йавнӑ хыҫҫ[illegible] Кол̧цовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан ко[illegible]хоз декабӗрӗн 29-мӗшне уйа 4 пин [illegible] тислӗк кӑларнӑ, 50 гектар ҫинче йур [illegible]нӑ. Йалхуҫалӑх машинисемпе лаша тавр[illegible]шӗсене йусаттарнӑ, вӑрлӑхлӑх тырӑна [illegible] процента йахӑн суртласа тасатса хунӑ.

Анчах, районри нихӑш колхоз та, „Пе[illegible]лешу" тата Кол̧цовка колхозӗсӗр пуҫ[illegible] ҫуракине кирлӗ пек хатӗрленме тыт[illegible]ман-ха. 1937 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса [illegible]нӗ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса, 1938 ҫулхи ҫу[illegible]акине хатӗрленессипе колхозсем выр[illegible]тан та тапранман. Уйрӑмӑнах вӑрлӑх ва[illegible]л̧и уйӑрса хӑварнӑ тырӑ пирки ӗҫ йа[illegible] тӑрат. Районри вӑрлӑх лаборатори [illegible] пурӗ 85 колхозран 63 колхозӑн вӑрлӑх[illegible] анализ туса, акма йурӑхлине сӑнаса пӑх[illegible]нӑ хыҫҫӑн, нихӑш колхозӑн та вӑрлӑхсе[illegible] акма йурӑхлӑ пулни палӑрман. Ҫавӑн [illegible]кех уйа торф, тислӗк кӑларасси, фосфо[illegible]рит кали ҫӑнӑхӗсене кӳрсе хатӗрлесси [illegible] йур тытасси, йалхуҫалӑх машинӗсене йу[illegible]саттарас ӗҫе те тытӑнман-ха.

Чылай колхозсенче ҫуракинче акма кан[illegible]тӑр вӑрри, пӑрҫа, клевер вӑрлӑхсем ҫит[illegible]меҫҫӗ.

Сл̧ота пухӑннӑ йулташсем ҫуракине хатӗрленессипе районри организацисем[illegible] колхозсене пулӑшас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр[illegible] ӗҫленине палӑртрӗҫ, асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерсе 1938 ҫулхи ҫуракине бол̧шевикла хатӗрленнипе кӗтсе илме пулчӗҫ.

Мих. Йаковлев.

Тӗрӗсленӗ заметкӑсем тӑрӑх.

„Растратчиксем йава савӑрнӑ"

Декабӗрӗн 18-мӗшӗнче „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра „Растратчиксем йава савӑрнӑ" йатлӑ заметкӑ пичӗтленсе тухнӑччӗ. Карайри (Трак р.) чӑпта ҫапакан ертел правленинче ӗҫлекен пуҫлӑхсем: ертел правленин председателӗ И. Тыӊаков —290 тенкӗ, бригадир Алексейев—1641 тенкӗ, правлени председателӗн заместителӗ А. Алексейев—400 тенкӗ, Филиппов 1548 тенкӗ, Фомин—1057 тенкӗ растратӑ тунӑ. Ҫак ҫӳлте асӑннӑ растратчиксем чӑпта ертелӗн пурлӑхне тустарнӑ. Вӗсем пӗрле пухӑнса час-часах ҫемйелӗ ӗҫкӗ-ҫикӗсем туса иртернӗ. Растратчиксем хушшинче ӗҫ: „Есӗ мана ан тив, епӗ те сана тивместӗп, пурӑнма пӗлес пулат", текен шухӑшпа пулса пынӑ. Ҫавӑнпа та ӊӗрпӗрине тивменнипе ертел укҫи-тенкине 5 пине йахӑн ҫаратнӑ.

Халӗ Трак районӗнчи прокурор: вырӑна тухса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн заметкӑра кӑтартнисем пурте тӗрӗс пулчӗҫ, Тыщакова Алексейева, Филиппова, Фомина халӑх пурлӑхне ҫаратнӑшӑн уголовнӑй кодексӑн 116-мӗш статйипе айӑпласа ӗҫе суда панӑ, тесе пӗлтерчӗ.

Колхозра сӑтӑрҫӑсем [illegible]ларнӑ

Патӑрйел районӗнчи Алманчӑри Ленин йачӗпе тӑракан колхозра сӑтӑрҫӑсем [illegible] йава ҫавӑрса колхоза хӑйсен аллине [illegible]вӑрса илнӗ. Колхоз председателӗ Марин [illegible] тӑванӗсем—чиркӳ старӑсти, манашкӑ та[illegible] сектантсем, кулак тавраш сем, ссылкӑ[illegible] йанӑскерсем. Вӑл 1934 ҫулта колхоза [illegible]латаҫ шутпа колхозран тухса, нумай ҫын[illegible]сене илӗртнипе колхозран кӑларттарн[illegible] Ӑна колхоза хирӗҫле пынӑшӗн халӑх [illegible]чӗ тивӗҫлипе айӑпларӗ. Вӑхӑт нумайах [illegible] иртмест, Марин кайалах колхоза пыр[illegible] кӗчӗ. Ӑна колхоза кӗнӗ-кӗменех йал[illegible] карма сӑварсем тӑрӑшнипе тата райҫӗр[illegible] пайӗн пуҫлӑхӗ Иванов пулӑшнипе йалхуҫалӑх ертелӗн уставне пӑссах: колхоз[illegible] сасӑлама пултаракансем 300 ҫын пулсан 119 ҫын пухура пулнипех колхо[illegible] председателӗ туса хураҫҫӗ. Ҫапла ва[illegible] Марин колхозри ӗҫлӗрех ҫынсене хӑй[illegible] майлӑ вырнаҫтарса тухрӗ. Ҫак[illegible] хыҫҫӑн вӗсем колхоз пурлӑхне салат[illegible] тытӑнчӗҫ. Колхоз председателӗ Марин 892 тенкӗ, правлени членӗ Логинов — [illegible] пин тенкӗ, Гаврилов завхоз 1 пин тен[illegible] колхоз укҫине хӑйсен кӑсйине чикн[illegible].

Куна ревизи комиссийӗ шыраса тупсан, в[illegible]сем „епӗр вӑл укҫана кивҫен илнӗ" те[illegible] суйа документсем туса хунӑ.

Марин пӗрмай ерех ӗҫсе ҫӳренипе ко[illegible]хозниксене хӗнениссем те пулнӑ.

Кунта самокритикӑ ҫинчен шарлама[illegible] те ҫук, тесе пӗлтерчӗҫ колхозниксем.

„Чӑваш Коммунӗ" хаҫат редакцийӗ за[illegible]меткӑна Патӑрйел ҫӗрӗҫ пайне тӗрӗсле[illegible] йанӑччӗ.

Халӗ заметкӑ тӑрӑх вырӑна тухса тӗ[illegible]рӗслесен: заметкӑ тӗрӗс, растратчиксемпе сӑтӑрҫӑсене вырӑнтан кӑларса суда панӑ тесе пӗлтерчӗ ҫӗрӗҫ пайӗ.

Кӗлленчӗк тӑпралӑ уйсенче тарӑн сухаланин усси

Акса йе лартса тӑвакан кул̧турӑсем вӑйлӑ тымар йарса, аван аталанса ӳсмеле пултӑр тесен, тӑпрари нӳрӗке, тата ӳсентӑрансене ӳсме кирлӗ тӑпра ӑшӗнчи йапаласене ытларах пухса тӑма тӑпран ҫухаланакан сийӗ лайӑх тытӑмлӑ пулмала. Ҫӗре ҫемӗҫтермели органикӑла йапаласем (тислӗк, торф), извӗс тӑкни, курӑксем акса туни тӑпрана лайӑх тытӑмлӑ (структурӑлӑ) пулма пулӑшат. Кунсӑр пуҫне, ҫӗре тарӑн сухаланӑ хыҫҫӑн сухаланакан сий айӗнчи минераллӑ йапаласем органикӑлӑ йапаласемпе хутӑшни те тӑпрана лайӑх тытӑмлӑ тӑват. Тарӑн сухалани тӑпрара ӳсентӑрансене кирлӗ йапаласене пухма, ӳсентӑрансене вӑйлӑ тымар йама пулӑшат.

Ҫӗре тарӑн сухалани мӗнле усӑ панине сӑнаса тӗпчеме Чӑваш йалхуҫалӑх институчӗ хӑйӗн студенчӗсене практикӑла ӗҫсене вӗрентмели хуҫалӑхра чылай сӑнавсем туса иртерчӗ.

Ку хуҫалӑхра кӑшт тайлӑмрах, вӑтам кӗлленнӗ тӑпра. Кун пек тӑпрасем Чӑваш республикӗн ҫурҫӗрӗнче нумай. Пурӗ 16 тӗрлӗ сӑнав тунӑ. Тарӑн сухаласа ҫӗре тӗрлӗ майсемпе ҫемҫетнӗ.

Сӑнав участкисем ҫинче кӗрсухиве 1935 ҫулта 24—25 сантиметр, [illegible] ҫулта 20 сантиметр тарӑнӑш сухаланӑ. Контрол̧лӗ пӗррӗмӗш участкӑра ҫӗре тарӑн сухаланан. Сӑнавсем кӑтартнӑ тӑрӑх, тарӑн [illegible] сухах [illegible] 2—3 ҫул сиктерсе тумала (5—7 ҫул хушшинче 2—3 хут). Ытти ҫулсенче 3—4 сантиметр таран ӑшӑхрах сухалама йурат. Ҫапла пулнипе чи айала лекнӗ ҫумкурӑксен вӑррисем пӗтеҫҫӗ тата тракторсемпе ӗҫленӗ чух ҫунтармали йапаласене те нумай перекетлеме пулат.

Ҫӗре ҫемӗҫтермели йапаласене (тислӗк, туранӑ улӑм, фосфорит ҫӑнӑхӗ, сил̧вӗнит) сӑнав участкисем ҫине 1936 ҫулхи кӗркунне, суперфосфата 1937 ҫулта ҫуркунне йур кайсан тӑкнӑ. Тислӗкпе туранӑ улӑма кӗркуннех ҫӗре сухаласа тӑпра айне тунӑ. Фосфорит ҫӑнӑхне, сил̧винита, суперфосфата ҫуркунне 12 сантиметр тарӑнӗш сухаласа тӑпра айне тунӑ. Ҫӗре ҫемӗҫтермели йапаласем сухаланакан сийри тӑпрапа аван хутӑшчӑр тесе, кун хыҫҫӑн тата тепӗр хут отвалсӑр плугпа 20 сантиметр тарӑнӗш сухаланӑ. Кун хыҫҫӑн зигзаг сӳрепе пӗр йӗрех виҫшер хут сӳренӗ те, ретӗн акакан ҫейалкӑпа „цезиум" сурт тулӑ акнӑ. Акмали нормӑ 1,6 центнер пулнӑ.

Сӑнав участкисем ҫинче тислӗк тӑкнӑ ҫӗрте тулӑ пит вӑйлӑ ӳсрӗ. Тулӑ шӑркана ларнӑ вӑхӑтра ҫӑмӑрсем пулчӗҫ. Ҫак вӑхӑт тӗлне тулӑ пит ҫӳлӗ ӳсрӗ, вӑра вӑйсӑр ҫӑмӑр ҫунипех вырӑнӑн вырӑнӑн [illegible]. Тырӑ тухӑҫне [illegible] ӳкнӗ вырӑнсенче тухӑҫ сахалланнӗ, тулӑ пӗрчисем вӗҫӗрӗ пулнӗ. Кунсӑр пуҫне вулп[illegible] [illegible] ... икӗ сӑлтав тулӑ тухӑҫне чылайах начарлатрӗҫ пулсан та, сӑнав участкисем ҫинче тулӑ аван пулчӗ. Кашни участкӑ ҫинче мӗн чухлӗ тырӑ тухнине ҫак таблицӑпа кӑтартма пулат.

Участкӑ номӗрӗ	Кашни гектартан миҫе центнер тухнӑ: Тырӑ	Улӑм
1	19,8	40,2
2	24,5	49,5
3	33,0	71,0
4	29,0	55,0
5	36,5	93,5
6	23,0	49,0
7	40,8	56,2
8	45,0	81,0
9	41,4	74,6
10	33,0	53,0
11	28,8	35,7
12	15,3	19,7
13	25,0	41,0
14	27,0	43,0

Ашӑх сухаланӑ контрол̧лӗ участкӑ ҫинче (гектар ҫине куҫарса шутласан) 12 центнер, тарӑн сухаланӑ контрол̧лӗ иккӗмӗш участкӑ ҫинче—19,5 центнер тырӑ пулнӑ. Ку участкӑсене иккешне те нимӗнпе те ҫемӗҫтермен. Тарӑн сухаланипех 7,8 центнер—65 процент ытларах тухӑҫ хутшӑннӑ.

Контрол̧лӗ иккӗмӗш участкӑна (ӑна та 20 сантиметр тарӑнӗш сухаланӑ) 4-мӗш номӗрлӗ участкӑпа танлаштарса, пӑхсан, сил̧вӗнитпа суперфосфат тӑкса ҫемӗҫтерни тырӑ тухӑҫне гектарта 9,5 центнер таран ӳстерни курӑтпӑр. Контрол̧лӗ иккӗмӗш участкӑ ҫинчен, гектар ҫине куҫарсан 19,5 центнер, 4-мӗш номӗрлӗ участкӑ ҫинче—29 центнер тулӑ тухнӑ. Пур йенчен те пӗр пек условисенче выртакан участкӑсенчен пӗринче, 4-мӗш номӗрлӗ участкӑна тарӑн сухаланисӗр пуҫне тата сил̧винитпа суперфосфат тӑкса ҫемҫетнинчен килнӗ.

Тислӗк ытларах тӑкнӑ участкӑ ҫинче тырӑ та аванрах пулнине сӑнавсем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех тата фосфорит ҫӑнӑхӗ усӑ панине те палӑртмала. Иртнӗ ҫул фосфорит ҫӑнӑхӗ тӑкнӑ участкӑсем ҫинче тулӑ суперфосфат тӑкнӑ участкӑсенчен начартарах пулнӑччӗ. Кӑҫал тепӗр майлӑ пулчӗ. Ку ӗнтӗ фосфорит ҫӑнӑхӗ тӑкнӑ ҫул ҫеҫ мар, малали ҫулсенче те тырӑ тухӑҫне ӳстерме пулӑшнине кӑтартат.

Иртнӗ ҫуркуннех Йалхуҫалӑх институчӗ Кӑшавашри Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхоз ҫӗрӗ ҫинче ҫураки тунӑ чухне ҫӗре тарӑн сухаласа сӑнав турӗ. Сӑнав тума ҫакӑн пек участкӑсене уйӑрнӑ:

1) ӑшӑх—14 сантиметр тарӑнӑш сухалани,

2) тарӑн—25 сантиметр тарӑнӑш сухалани,

3) минераллӑ ҫӑнӑхсем (кали тӑварӗпе суперфосфат) тӑкни,

4) тарӑн сухалани тата гектар ҫине 60 тоннӑ тислӗк тӑкни.

Тӑпра пахалӑхӗ Йалхуҫалӑх институчӗн ҫӗрӗ ҫинчи пекех.

Ӑшӑх сухаланӑ 1-мӗш участкӑ ҫинче тулӑ гектартан 21 центнер, тарӑн сухаланӑ 2-мӗш участкӑ ҫинче 34 центнер—61,9 процент ытларах тухрӗ. Тарӑн сухаланипе ҫеҫ 13 центнер ытларах тулӑ тухнӑ.

3-мӗш участкӑ ҫинче гектартан 46 центнер, 4-мӗш участкӑ ҫинче—58 центнер тухнӑ. Ҫапла ӗнтӗ, тарӑн сухаланакан сийне ҫуркунне тарӑнлатни те тырӑ тухӑҫне ӳстерме пултарни курӑнат. [illegible] ... че те, Кӑшавӑш колхозӑн ҫӗрӗ ҫинче те тарӑн сухаланӑ участкӑсем ҫинче ҫумкурӑксем пулман, тулӑ пулса ҫитерехпе ҫеҫ ӳнта-кунта йытпыршипе мӑйансем курӑнкаларӗҫ. Сӑнав участкисем тавра ӗнчи ытти ҫӗрсем ҫинче ҫумкурӑксем нумай пулнӑ. Ӑшӑх сухаланӑ участкӑ ҫинче ҫумкурӑксем нумай пулнӑ пирки, ҫу каҫа икӗ хут ҫумлама кирлӗ пулчӗ.

Ҫав сӑнавсем тӑрӑх ҫапла выводсем тума пулат:

1. Тӑпран сухаланакан сийне тарӑнлатни, тӑпрана лайӑх тытӑмлӑ пулма, микроорганисӑмсене ӗрчеме пулӑшат, ӳсентӑрансене вӑйлӑ тымар йама аван условисем туса парат, ҫав май тырӑ тухӑҫне хӑпартат.

2. Тислӗк ытларах тӑкни вӑйлӑ тырпул тума пулӑшат. Тарӑн сухаланӑ вырӑна тислӗк ытларах тӑкни тӑпрара пысӑк улшӑнусем тӑват, ӳсентӑрансене кирлӗ таран апат илсе тӑма пулӑшат.

3. Извӗҫе тислӗкпе пӗрле тӑкни тырӑ тухӑҫне хӑпартат. Минераллӑ ҫӑнӑхсемпе пӗрле тӑксан извӗҫӗн усси ытлашши пӑлах мар.

4. Фосфорит ҫӑнӑхӗн усси суперфосфатӑн пек мар, темиҫе ҫула пырат. Кунсӑр пуҫне фосфорит ҫӑнӑхӗ йӳҫек тӑпрасен йӳҫекне чакарма та пулӑшат. Ҫавӑнпа Чӑваш республикӗн уйӗсенче фосфорит ҫӑнӑхӗпе ҫемӗҫтересси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑмала.

5. Сухалакан ҫӗр сийне тарӑнлатассине ҫуракинче те кӗр сухинче тунӑ пекех ӑнӑҫлӑ туса иртерме пулат.

6. Тарӑн сухалани ҫумкурӑксене пӗтерме пулӑшат.

И. Афанасйев.

411 тенӗлех сарчӗҫ

Комсомол Чӑваш Обкомӗ ҫумӗнчи аслӑ пионервожатӑйсен шкулӗнче вӗренекен комсомолецсем 1938-мӗш ҫулшӑн хаҫат-журнал сарас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлерӗҫ. Социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, пурӗ 411 тенкӗ те 20 пуслӑх, 157 екземпл̧ар тӗрлӗ хаҫат-журнал ҫырӑнса илчӗҫ. Вӑл шутран: „Ҫамрӑк бол̧шевик" 51 екземпл̧ар, „Ленинская смена" 26 екземпл̧ар, „Вожатый" 26 екземпл̧ар ҫырӑнса илнӗ.

Мих. Александров.

(815)

Тутаркас райкомӗ коммунистсене вӗрентессишӗн тӑрӑшмаст

[illegible] Тӗп Комитечӗпе Сталин [illegible] кадрсене техникӑна вӗ-[illegible] лозунг ҫумне большевизмӑ [illegible] кадрсене политикӑна вос-[illegible] парас лозунг хушас ый-[illegible] пит те ҫирӗппӗн лартрӗҫ. [illegible] парторганизацин задачи ҫак [illegible] хыҫҫӑн та тӗплӗн пурнӑҫ-[illegible] пулать.

[illegible] большевизмӑ вӗренес, кадрсе-[illegible] политикӑла воспитани парас [illegible] Тутаркас" районӗнче ытла та [illegible] пӗлӗкӗр пырать-ха. Райком секре-[illegible] Зубков йӳлташран пуҫласа, [illegible] парторгсене ҫитиччӗнех комму-[illegible] политикӑна вӗрентессишӗн [illegible] ҫук.

[Д]екабӗр уйӑхӗнче Шупашкар-[illegible] Зубков йӳлташа декабӗрӗн [illegible] ИМЗО йӗнӗпе парти [illegible] вӗренекенсен конферен-[illegible] пулассе ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав [illegible] вӗренекенсене пӗлтерсен, [illegible] кулленхи ӗҫӗсене пӑрахса [illegible] вӗренӗве ҫинчен шухӑшлаҫ-[illegible], Зубков вӗренекенсене [illegible] 18-че ҫеҫ пӗлертернӗ.

[Ра]йком коммунистсене политикӑ-[illegible] вӗрентме тӑрӑшмаввине ҫак фак-[illegible] лайӑх кӑтартать. Парти Тӗп Ко-[illegible] йышӑннӑ тӑрӑх кашни заоч-[illegible] кӑмӑлли кунсемсӗр пуҫне, кон-[illegible] пулма виҫшер кун хуш-[illegible]. Анчах Тутаркасра заоч-[illegible] конференцинче пулма [illegible] кунсем памаҫҫӗ. Райониҫ [illegible] кабинетӗнче заочниксене [illegible] кирлӗ условисем туса [illegible].

[Зао]чниксемпе пӗрре те консулӳ-[illegible] туса иртермен. Канмали [illegible] парткабинет та канать. Биб-[illegible] кӗнеке илес тесен [п]умай чух библиотекӑр вырӑн-[illegible] пирки, кайала ҫаврӑнса [килме ти]вет.

Парти вӗренӗвӗ йалсенче те ҫаплах пекех сӳрекен пырать. Тутай подрайонӗнче парти райкомӗн пропагандисӗ А. Мамайкин парти историне вӗрентес ӗҫпе ӗҫлет. Унӑн план тӑрӑх кашни уйӑхра виҫшер занятти туса иртермеле, анчах вӑл 6 уйӑх хушшинче те 8 занятти ҫеҫ иртернӗ.

Ыйтасчӗ, райком инструкторӗсем, секретарӗсем ултӑ уйӑх хушшинче Мамайкин пропагандиса курнӑ-ши? Курнӑ пулсан мӗншӗн пулӑшман? Ку ыйтусем ҫине кӗскен: интересленмен, тесе кӑна ответлеме пулать.

Кунсӑр пуҫне, вӗренӳ ӗҫӗнчен йуринех пӑрӑнса ҫӳрекен коммунистсем ҫинчен пуҫламӗш парти организацисенче те, райкомра та пӑхса тухма вӑхӑт. Мӗншӗн тесен вӗренме ӳркенекенсен йышӗ мӗн пур вӗренекенсенчен 50 процента ҫитет. Вӑл хисепе райком секретарӗ Смирнов та (декабӗр уйӑхӗнче конференцире пулман), райком членӗ Куклян та (пӗр темӑпа та зачот паман), райкомол секретарӗ Йемелйанов та (йулашки темӑпа зачот паман) кӗреҫҫӗ. Шатракас йалсовет председателӗ Иванова Александра виҫӗ темӑпа та зачот паман, Калайкасри пуҫламӗш парторганизацин парторгӗ Дубровский йултӑш та заочник шутланса тӑрать, анчах вӑл занятине пӗрре те пыман. Чӗнсен:

— Вӗренменшӗн нумай-нумай выгогор параҫҫӗ, вӑл куҫа кӗмест,—тет Дубровский.

Тутаркас райкомӗн парти вӗренӳ ӗҫне йӗркелемлех. Коммунистсене политикӑла воспитани парасси—райком тумали ӗҫ.

Вир. Мӗтри.

Стахановецсен ӳсӗмӗсем мӗн ҫинчен калаҫҫӗ

Калашра вагонсем [illegible] завод (ТР Союзӗн Аслӑ Советне [illegible] умӗн пулса [illegible] стахановла [illegible] наклайхӗнче чылай ӳсӗмсем турӗ. Вунӑ-кулӑх заводӑн планне анаҫлан тултарса пыма кирлӗ условисемпе майсем пуррине тӳсӑн кӑтартса пачӗ. Васильева, Богомолов, Гусев, Митрофанов, Миронов, Агафонов тата ытти стахановецсем те малтан нормӑна 160 процент таран тултарнӑ пулсан, халӗ 330 процентпар тултарса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ.

Механически цех коллективӗ ҫӗнӗ ҫула ҫӗнтерӳлӗн кӗтсе илет. Цехри токар Пуманов йултӑш нормӑна 300 процент, Харитонов 320 процент тултараҫҫӗ. [illegible] пайланах [illegible] ра вуншарӑн шутланаҫҫӗ.

Анчах завод пӗтӗмӗшпе илсен кайа йулса пырать-ха. Кайа йулса пырассине пӗтерме сталинла вунӑкунлӑх тапхарӗнче уйрӑм стахановецсем ӗҫленӗ меслетсене пӗтӗм рабочисен ӗҫ меслечӗ тумала. Ҫакӑншӑн кӗрешмеле халӗ производствӑри командирсемпе партипе профсойуз организацисен.

Ник. Йумангай.

Нормӑна тултарман рабочи ҫук

1937 ҫ. манӑн сменӑ плана тултарассине ытти сменӑсенчен малта пычӗ. Нормӑ тӑрӑх кашни куллен сменӑра 624 фанерӑ листи туса кӑлармала пулнӑ пулсан, хӑшпӗр кун епӗр 2-шер нормӑ ытла туса кӑларнӑ. Епӗр ҫулталӑк планне те ытти сенчен малтан, нойабӗр уйӑхӗччен, тултартӑмӑр.

1937 ҫулта стахановла йухӑм уйрӑмах вӑйлӑн сарӑлса пынине палӑртмала. Малтанхи вӑхӑтрах 624 листа туса кӑларасси те пирӗншӗн йавӑр пек туйӑначчӗ. Кайарахпа, рабочисем техникӑна алла ҫавӑрса илнӗ май тата вӗсене ӗҫлеме кирлӗ условисене туса парсан, нормӑна ытлашшипех тултарма пуҫларӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ пире 624 листа ним те мар. Николайев, Волков—прессовщик, Иаковлева—сортировщица кашни кунхи нормӑсене йаланах 200—220 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Манӑн сменӑра 24 ҫын ӗҫлет. Пурте вӗсем нормӑсене тултараҫҫӗ, 12 стахановец.

Пирӗн 1938 ҫулта план тӑрӑх кунне 880 фанерӑ листи туса кӑлармала. Ку пирӗншӗн ним те мар. Мӗншӗн тесен епӗр кӑҫалах 880 листа кӑна мар, 1.300 листа ытла туса кӑларнӑ.

„Труженик" заводри фанерӑ тӑвакан цехри сменӑ маҫтӑрӗ

И. Смирнов.

Пирӗн ҫул лайӑх

Кӑҫал манӑн трактор ҫулӗ ҫинче пӗр аварипе крушени те пулман. Тракторпа ҫӳрекен вагонеткӑ линине епӗр йаланах таса та йӗркелӗ тытатпӑр.

Манӑн 12 километр ҫул. Ҫул ҫинче пӗтӗмпе 16 ҫын ӗҫлет. Вӗсенчен уйрӑмах 7-мӗш участкӑри Никита Обозов йултӑшӑн паха ӗҫне палӑртмала. Обозов йултӑш ҫула йаланах отлично тытать. Состав иртсе кайсанах ҫула тӗрӗслесе пӑхать, хӗлле йур ҫусан сийӗнчех тасатать.

1937 ҫулта епӗр 2.5 километр чукунҫул хывӑрӑмӑр, халӗ пирӗн тата 6 километр сармали йулчӗ. Ӑна епӗр ҫитес ҫуркунне сарса пӗтерме пулатпӑр. 1938-мӗш ҫулта тракторсем ҫӳремелли ҫул пӗтӗмпех чукунҫул линийӗсемпе пулать. Ҫакӑ вӑл тракториссене пӗр аварисӗр, чарӑнусӑр ӗҫлеме условисем туса парать. Ҫавӑн пекех епӗр 1938 ҫ. хамӑр ҫула отлично тытма пулатпӑр.

Ҫӗмӗрлери трактор ҫулӗ ҫинчи маҫтӑр К. Тарасов.

Пуйӑн пурӑнать, татах та пуйанрах пурӑнассишӗн кӗрешет

ПАТАРИЕЛ (телефон тӑрӑх). Кӑҫал Тусири „Хӗрлӗ Туса" колхоз нихӑҫанхинчен вӑйлӑ тырпул туса илчӗ. Вӑтам шутпа гектартан сӗлӗ 25 центнер, ҫӗрулми 20 центнер тухнӑ. Колхоз тупӑшӗ иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 3—4 хут ытла ӳснӗ. Кашни ӗҫкунӗ пуҫне 13 килограм ытла тӗштырӑ тивет. Колхозри стахановецсем Данил Мудуков 975 пӑт, Алексей Русов 827 пӑт, Григорий Салмин 894 пӑт, Кузьма Петров 893 пӑт тӗштырӑ илчӗҫ.

Кун пек хуҫалӑхсем колхозра нумай. 300—400 пӑт илекенсем ҫурри ытла. ҫӗр пӑтран кайа илекенсем ҫукпа пӗрех.

Ҫаксене курa колхоз 1938 ҫулта татах вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешӗве тухрӗ. Колхоз хӑйӗн умне ҫитес ҫулта гектартан 150 пӑтран кайа мар тырӑ туса илес задачӑна лартрӗ. Уйрӑм бригадӑсем гектартан 35 центнер тырӑ туса илме кӗрешӗве тухрӗҫ. Колхоз 341 гектар ҫинче йур тытать, тулӑ акмалли 100 гектар ҫине ҫӗрӗк тапри кӑларать, 14 гектар ҫине кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ такать, 3 гектар ҫине фекали кӑларать тата ытти агротехникӑ ӗҫӗсене туса иртерет. 30 гектар ҫине алӑпа ӗҫйланӑ вӑрлӑх акать.

Н. Пушкин.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителстви

Лини хывасси мӗнле пырать

Йанварӗн 2-мӗшӗ тӗлне 25,5 километр тӑршӗ лини хывнӑ. Машинлӑ бригадӑ килсе ҫитсен лини хывассине хӑвӑртлама пысӑк майсем пулаҫҫӗ.

Строителствӑ управленийӗ февралӗ уйӑхӗнче Канашпа Ҫӗрпӳ хушшинче пуйӑссем ҫӳретермеле тума палӑртрӗ. Лини хывас ӗҫе пӗтӗмпех 1938 ҫулхи пӗрремӗш квартӑлта пурнӑҫа кӗртмеле. 1938 ҫулта строителстварӗ пур ӗҫсене те: ҫӗр ӗҫне, кӗперсем тӑвассине, служба тата пурӑнмали ҫуртсем лартассине, урӑхла каласан вунпӗр мӗлйун ҫурӑ тенкӗ тӑракан ӗҫсене пурнӑҫламала.

770 лав тислӗк тӑкрӗҫ

ЕЛӖК. Йефремкассинчи „Майӑн 1-мӗшӗ" колхозра 1938 ҫулта татах та вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешсе, халӗ уйсенче 102 гектар ҫинче йур купаласа тухрӗҫ. Унсӑр пуҫне тата бригадӑсем пурте хӗрсех уйа тислӗк кӑлараҫҫӗ. Халӗ мӗн пурӗ уйа 770 лав тислӗк турттарчӗҫ. Ку тӗлӗшпе бригадӑпа бригадӑ ӑмӑртса ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Лисин.

Ленинградри Арктика Музейӗн работникӗсем пожар тӗпчевҫи Г. Седов експедици участникӗсенчен пӗри Ҫурҫӗр полусне кайма тухсан ӳкерсе илнӗ 3.000 метр кинопльонкӑ тупнӑ. Ҫак пльонкӑ кадрӗсем геройла експедицин епизочӗсене кӑтартаҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Г. Седов експедицин „Св. Фока" судние Флор сӑмсахӗнчен Мурманск сыранӗ хӗрнеле кайакан ҫул ҫинче кӗтмен ҫӗртен тӗл пулнӑ моторлӑ судно ӳкерсе илнине кӑтартнӑ.

(Союзфото).

Иртӗнне Москвин „ӗҫӗсем ҫинчен"

Мӑн Йавӑш йалпо [illegible] Мӑн Йавӑшра, Кӗҫӗн Ҫипекре, Сӑкӑтра тата Ҫавалкас Мӑратра хӑйӗн уйрӑмӗсене тытса тӑрать. Анчах та ҫак йалсенчи йалпо уйрӑмӗсенче сутуилӳ тӑвас ӗҫ чӑтма ҫук йапах.

Йалпо председателӗн И. Москвинӑн ӗҫне тишкерсе пӑхсан ытла та тӗлӗнмеле. Йалпо ӗҫне Москвин йухӑнтарса пырать. Канашри тата Ҫӗмӗрлери базӑсене 57 000 тенкӗлӗх парӑма кӗрсе, ҫав парӑма парса татса, йалпона кирлӗ таварсем илсе килессӗн мар.

Йалпо ӗҫӗсене вӑйлатма правлени членӗсем тӗрлӗ майсем сӗнчӗҫ. Вӗсем сӗннипе пекарни тума тытӑнни 4 уйӑх ҫитрӗ ӗнтӗ, материалсем те ҫителӗклӗ, анчах пайшчиксене паллӑ мар: мӗншӗн пекарньӑна Москвин тутармасӑр тӑрать.

Кунсӑр пуҫне кашни лавкарах кӑмакасем тутарма палӑртнӑ. Ҫак ӗҫе те вуҫех манӑҫа хӑварнӑ пирки, Сӑкӑт тата Ҫавалкас Мӑратри лавкасем хупӑнса лараҫҫӗ. Прикашчиксем икшер сехет сутӑ тунӑ хыҫҫӑн, лавкана хупаҫҫӗ. Вӗсенче ӗҫлеме май ҫук, питӗ сивӗ. Кӗҫӗн Кипекри лавка та прикашчик пулман пирки нойабӗр уйӑхӗнче хупӑ ларчӗ.

Йалпона пӗтӗмӗшпех йӑла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ ҫынсем ҫавӑрса илнӗ. Москвин парти членӗ пулин те, йалпо ӗҫне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшмасть. Кашни кун ниме пӗлмесӗр хӑйӗн тусӗсемпе ӗҫет. Акӑ, нойабӗр уйӑхӗнче Москвин, Мӑн Йавӑш ҫынни Миххи старике Сӑкӑта, хӑйӗн тусӗсем патне, йалпо закупщикӗ Карпов патне ӗҫме лава тытса кайать. Киле тавӑрӑнна чухне вӗсем Михҫи старике Кивҫурт Мӑрат патӗнчи варӑмӑна кайса пӑрахаҫҫӗ. Ҫакӑтан ӗнте вата ҫынна чӗри те тапма чарӑнать. Апла пулин те Вӑрнар районӗнчи халӑх суйӗ Москвина ҫакнашкал ирсӗр ӗҫне халӗ те пӑхса тухман.

Йалпо укҫине пӗтерес шухӑшпа 15 километра кайса 1000 кирпӗчшӗн 100 тенкӗ укҫа ытлашши пӗтерет, ҫав кирпӗчех Кивҫурт Мӑрата кайса илсен ҫурри ытла йӳнерех ларать.

Карпов Сергей Йермошкӑ йалповӗнче закупщик пулса ӗҫленӗ. Ӑна унтан сӑтӑрла ӗҫленӗшӗн кӑларса йанӑ. Анчах ҫакна пӗле тӑрах Москвин Карпова Мӑн Йавӑшри йалпо закупщикне илет. Карпов Йермошкӑ йалсоветӗнче йури кайман таварсене илсе пырса йалпона пӗтересси патнех илсе пынӑ. Москвин хӑйӗн тахҫанхи тусне, Маслов Ивана, йалпона прикашчике илет. Маслов прикашчикре пайанхи куна та судпа айапланса ирӗксӗртен ӗҫлемели шутпа ӗҫлет. Ҫавӑн пекех Хапӑсри, Алкаҫӑнри йалпосенче сӑтӑрла ӗҫсем тунӑшӑн кӑларса йанӑ Йевҫейев Петра счетовода илет. Москвин, Карпов, Маслов т. ыт. те йалпо лавкисенчи прикашчиксене документсем тӑрӑх час-часах улталаҫҫӗ. Ӗҫкӗ ҫинкӗпе прикашчиксене сӗмсӗрлентереҫҫӗ.

Акӑ, Ҫавалкас лавкинчи прикашчикӗ, октабӗрӗн 17-мӗшӗнче ҫырнӑ актӑ тӑрӑх 486 тенкӗ те 17 пус, октабӗрӗн 23-мӗшӗнче ҫырнӑ актӑ тӑрӑх 470 тенкӗлӗх документсене пӑтратса ҫырса улталама тытӑннӑ, анчах прикашчик ҫийӗнчех асӑрханӑ.

Парти билечӗпе витӗннӗ сӑтӑрҫӑ

Вӑрманкассинчи Крупскайа йачӗпе тӑракан колхозра (Шупашкар р-нӗ) ПСК(б) Парти членӗ Смирнов колхоз председателне кӗрсе хӑйне вальли ӑшӑ йӑва ҫавӑрса, колхоз хуҫалӑхӗнче сӑтӑрла ӗҫсем туса пурӑннӑ. Вӑл йалхуҫалӑх ертелӗн уставне пӑхӑнман, колхозниксем каланине итлемен.

Колхозӑн МТФ-нче иртнӗ ҫулта 13 пуҫ сумали ӗне пулнӑ пулсан, кӑҫал 9 пуҫ ҫеҫ йулнӑ. „Меринос" йатлӑ ӑратлӑ такасем 5 пуҫ пулнӑ, йапӑх пӑхнипе 2 пуҫ ҫеҫ йулнӑ. Вӗсем те начар. Смирнов колхоз председателӗ пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра выльӑх-чӗрлӗх ҫине ҫаврӑнса та пӑхман. Ҫавӑнпа та выльӑх шучӗ чаксах пынӑ.

Ҫулла, лашасене Атӑл лӗшйенне улӑха йарсан, пӗр лаша шурлӑхра вилнӗ, ҫавӑнтанах тепӗр лаша ҫухалнӑ. Анчах ҫак лашасемшӗн никам та нимӗнле ответ та тытман.

Колхозниксен аслӑ пухӑвӗ лаша хакне Смирновпа унӑн заместителӗ Тихоновран 3.500 тенкӗ шыраса илес тесе йышӑннӑ. Апла пулсан та Смирнов тӳлесси ҫинчен аса та илмест.

Колхоз ҫумӗнче чӑпта ҫапакан ертел пулнӑ. Ҫак ертелте ӗҫленӗ тесе Смирнов колхозниксемпе килешмесӗрех—ҫулталӑкне 1.200 тенкӗ илнӗ, Тихонов завхоза—1444 тенкӗ, Скворцов счетовода 700 тенкӗ памала тунӑ. Кунсӑр пуҫне ӗҫкунӗ илнӗ.

Смирнов колхозниксемпе килӗшмесӗрех, колхоз лашине 500 тенкӗпе сутса йанӑ та, 300 тенкине пайанхи куна ҫитсе те колхоз кассине хывман.

Колхоз 1937 ҫулта 158 штук йуман пӗренесем илнӗ. Анчах Смирнов пӗренесене сутса пӗтернӗ, укҫине колхоз кассине хывман. Вӑл хӑйне вальли ҫурт лартнӑ вӑхӑтра 20 штук мачча хӑми, 8 штук урай хӑми никамран ыйтмасӑрах илсе кайнӑ.

Вӑл 1934 ҫулта Лапсар йалсовечӗн председателӗ пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра кашни килрен 4-шар килограм тырӑ пуҫтарттарнӑ, та 20 пӑт ыраш хӑй ҫумне никнӗ. Йулашкинчен йалпона хлебозакупкӑ шучӗпе 5 кулӗ ҫӗлӗ парса хӑйне вальли велосипед илнӗ.

Смирновсем критикӑпа самокритикӑна хӗссе лартнӑ. Вӗсем хӑйсене критиклекен колхозниксене тытса хӗненӗ.

Правлени аппаратне камсем кӗрсе вырнаҫнӑ-ха?

Смирнов 1925 ҫулччен чиркӳ ҫынни, бакалейпа ҫуту-илӳ туса пурӑннӑскер, партине сурӑх тирӗ витӗнсе хӗсӗнсе кӗнӗскер. Вӑл хӑйӗн заместителне Тихонов кулака, лишенец ывӑлне илнӗ. Тихоновӑн ашшӗ 15 гектаршар ҫӗр тара илсе акса пурӑннӑ.

Ҫапла вара Смирновпа Тихонов колхоз хуҫалӑхӗнче сӑтӑрла ӗҫсем туса колхоза хавшатма шутланӑ.

Смирновпа Тихоновӑн сӑтӑрла ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑлармa тивӗҫлӗ органсен ҫавӑрӑнса пӑхмала.

Н. М.

„Волочаевские дни"

Ленинградри орденла киностуди „Ленфильм" ҫак кунсенче „Волочаевские дни" йатлӑ ҫӗнӗ художествӑлӑ картинӑна монтаж туса пӗтерсе массӑлӑн пичетлесе кӑларма пана. Картинӑна сывӑх кунсенчех пӗтӗм ҫӗршыври екрансем ҫинче кӑтартма пуҫлаҫҫӗ. Сценарипе постановкӑ авторӗсем—орденоносец-режиссерсем икӗ тӑван Васильевсем хаҫат корреспондентне ҫапла пӗлтернӗ:

— „Волочаевские дни" фильмра епӗр 1918—1922 ҫулсенче Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче интервентсемпе шурггвардейецсене хирӗҫ халӑх паттӑрӑн кӗрешнине кӑтартса парас задачӑ лартрӑмӑр. Партизанла йухӑм суралса тухса ӳссе пынине, парти йертсе пынипе рабочисемпе хресченсем салтаксем пӗрлешнине тата тӑшмана таткӑлӑнах сӗмӗрсе тӑкнине сӑнласа кӑтартса паракан историлӗ пуйӑн материал пухрӑмӑр епӗр. Кино куракансем умӗнче екран ҫинче Инҫет-Хӗвелтухӑҫне интервентсенчен тасатнӑ истори паларӑх тапхӑрӗсем иртсе кайаҫҫӗ.

Фильмра Миша ролӗнче—республикӑн тава тивӗҫлӗ артистки В. Мяснӗкова, Андрей ролӗнче—артист Н. Дорохин, Вублик ролӗнче—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ Б. Блинов, Йегор ролӗнче—артист В. Лунин, полковник Усижима ролӗнче—артист [illegible] Свердлин, поручик Гришин ролӗнче—артист Н. Лавров, тылкӑна лекнӗ чапонец ролӗнче—Б. Хайдаров, чӗче стасик ролӗнче—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ Б. Чирков выляҫҫӗ.

Фильм вальли музыка ҫыраканӗ композитор Д. Шостакович.

„Пограничники" пиесса выльӑса кӑтартрӗҫ

[illegible] Декабӗрӗн 31-мӗшӗнчи йанварӗн [illegible] Сентервӑррири пӗрремӗш [колхоз] театрӗ Ҫӗрпӳ хулинче „Погранич[ники]" пиессӑна выляса пачӗ. [Де]кабӗрӗн [illegible]-мӗшӗнче ку пиессӑна [illegible] районри колхозник-стахановецсем сл[ё]тне пухӑннӑ йултӑшсем курчӗҫ. Тепӗр кунне хулара пурӑнакансене кӑтартрӗҫ.

Куракансем „Пограничники" спектакльпе кӑмӑллӑ [юлчӗҫ].

Мих. Пиковлев.

Ӗҫе урахлатса ҫенетни ҫук

[illegible]РЕҪ. Ҫак кунсенче комсо[мол ра]йкомӗн виҫҫӗмӗш пленумӗ иртрӗ. Пленум ПСК(б)П [illegible] кӗн IV-мӗш пленумӗн тата [ВЛКСМ Ч]КС Обкомӗн II-мӗш пленуме решенийӗсене сӳтсе-йаврӗ.

[Йӗп]реҫ районӗнчи чылай пуҫ[ламӗш комсомол] организацисенче ӗҫсем йӗр[килле пы]маҫҫӗ.

Мар[illegible] Тури Тимӗрчкассинчи ком[сомол] организацинчи ӗҫсем ава[ннине] кӑтартса параҫҫӗ. Комсорг [illegible]нев (райкомол членӗ пулнӑскер) комсомол пуҫламӗш организацисене йӗркелесе йарас вы[рӑнне] ӗҫкӗ хыҫҫӑн кайса хулиган[ла]ланӑ ҫине тӑнӑ, колхозниксене [хӗнесе] тытса хӗненӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн [ҫав] ҫеҫ комсоргран та, комсо[молран] та кӑларса ҫапнӑ. Ҫак [хыҫҫӑн] вӑл комсоргсене суй[лама лар]тас ӗҫре политикӑла сисӗм[лӗх] пулманнине кӑтартса парать. [Ра]йкомолӑн штатлӑ пропаганди[сӗ] хушшинче йурӑхсӑр ҫынсем [ӗҫле]ҫҫӗ. Выҫлири пропагандис Са[маркин]а райкомол лайӑх ӗҫлекен [пропагандиссенчен] пӗри, тесе [шут]ланӑ. Ҫав вӑхӑтрах Самаркин [„про]пагандис" политвӗренӳ ӗҫне [пӑрах]са йанине, ӗҫкӗ хыҫҫӑн кайса [хулиган]ла ӗҫсем туса пурӑннине [ком]сомол курман. Самаркин октабӗрӗн 23-мӗшӗнче ӳсӗрпе пӗр ҫам[рӑк] хӗрачана тытса хӗненӗ. Ҫак ӗҫшӗн Самаркин суд умӗнче ответ тыт[ма] тивӗҫлӗ пулнӑ. Анчах, райко[мол] [illegible] тимсӗр пуҫлӑхсем Самарки[на] пайан кунччченех комсомол рӗ[тӗн]че тытса тӑнӑ.

[illegible] комсомол пуҫла[мӗш] организацин организаторӗ Федорова никама пӗлтермесӗр, комсомол организаци ӗҫне пӑрахса, районри финанс пайне ӗҫлеме кӗнӗ. Ҫапла вара ку организацинче пӗр уйӑх ытла комсорг пулман. Комсомол ӗҫӗ сӳнсе ларнӑ.

Учител-комсомолецсем хушшинче йӑла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ комсомолецсем пур. Асанкассинчи шкул директорӗ Кузьмин комсомолец ӳсӗрпе арӑмне хӗнесе пурӑннӑ. Ҫак ӗҫе комсомол организацинче пӑхса тухса ӗҫне райкомола йанӑ пулнӑ, анчах райкомолта вӑл ӗҫе халӗ те пӑхса тухман.

Пленум комсомолӑн политвӗренӗвӗ мӗнле пынине пӑхса тухрӗ. Политвӗренӳ ӗҫӗ Йӗпреҫ районӗнче питӗ начар. Райкомол пайанхи куна районра миҫӗ кружок лайӑх ӗҫленине те, миҫе комсомолеца вӗренӗве йавӑҫтарнине те, миҫе комсомолец вӗренӗве ҫӳременнине те пӗлмест. Райкомол пропагандиссемпе ӗҫлемест, вӗсене час-часах улӑштарса тӑрать.

—Пирӗн кружокра ҫу каҫиччен 4—5 пропагандис пулчӗ (Иванов, Сидоров, Митрофанов т. ыт.). Вӗсем пӗри те йӗркелӗ ӗҫлемерӗҫ. Йулашки вӑхӑтра мана пропагандис туса хунӑ. Кӑна епӗ хам та пӗлмен. Райкомола пытӑм та, „Есӗ хӑвӑр кружокра пропагандис пулатӑн" тесе пӗлтерчӗ Козлов йултӑш, вара пӗр ҫӗклем тетрадсем, учебниксем выранне 3 хаҫат парса йачӗ,—тесе каласа пачӗ сыхӑну пайӗнчи комсорг Светлов йултӑш.

Дм. Михайлов.

Политвӗренӳ ӗҫӗ халӗ те йапах

[Ҫӗ]мӗрле, (хамӑр корреспондентран). [Полит]вӗренӳ ӗҫе йапах пынине комби[нат]ри комсомол организацине йертсе пы[ракан]сем ҫулахи вӑхӑтра йаланах сӑл[тав] ҫине йавантарса пыраччӗҫ. Хӑшӗнекехсенчи пуҫламӗш организацисем, [кружок]сем ҫук тесе ларнисем те пул[нӑ].

[illegible] ӗнтӗ ун пек сӑлтавсем тупма ҫук. [Кружок] ертӳҫисем те, вӑхӑт та пур. Анчах [illegible] курӑнмасть. Ӑна декабӗрӗн [illegible]мӗшӗнче пулса иртнӗ занятисен итогӗ[сем те] аван кӑтартса параҫҫӗ. ПСК(б) [партин] историне вӗренмелли кружока (ру[ковод]ителӗ Уруков) 15 ҫын пымала пул[сан], 4 ҫын ҫеҫ пына. Ҫавӑн пекех [полит]грамотана вӗренмели Борисов йул[тӑш] йертсе пыракан кружока 9 ҫын вы[рӑнн]е 3 ҫын пына. Сорокин вӗрентекен [кружокӑн] занятти те пулман. Пӗтӗмӗшпе [дек]абӗрӗн 23-мӗшӗнче 6 кружока [illegible]енчен ҫурри те пыман.

[Комбинат]ӑ комитечӗ политвӗренӳ ӗҫӗпе [illegible] ытти ӗҫсемпе те нимех те ту[ман, ком]итет йаланах питерӗнчӗк. Ҫам[рӑксен] [illegible] ӗҫлессине пачах пӑра[хӑшмарнӑ]. Комсомол йышӗ ҫав тери [ӳснӗ]. Ҫак 3—4 уйӑх хушшинче [illegible] та таман самраксемпе, хӗрачасем ку туса иртермен. Ку ӗнтӗ ОТ-[illegible] лав пухувӗн решенисене пурнӑҫ[ламан]е пӗлтерет.

[Политв]ӗренӳве, комитет секретарӗ Ку[illegible] сакин калана тӑрах, хальхи вӑхӑтра комсомолецсене пурне те йавӑҫтарнӑ. Ку аван. Анчах вӗсене кружоксем тӑрӑх тӗрӗс ҫирӗплетмен. Кашни комсомолецран, вӑл хӑш кружока вӗренме ҫӳреме кӑмӑл пуррине ыйтса йӗркелемен. Ҫавӑнпа та хӑшӗ-пӗрисем парти историне вӗренмисемех политграмота кружокне лекнӗ. Акӑ столярнай цехра маҫтӑрта ӗҫлекен Гр. Васильев 1933-мӗш ҫултанпах политграмота кружокӗнче вӗренет. Вӑл, ҫак кружокӑн программине тахҫанах вӗренсе пӗтернӗ, ыйтусене пурне те тӗрӗс ответлет. Ҫапах ӑна политграмота кружокне ҫӳреме ҫирӗплетнӗ.

Хӑш-пӗр цехри пуҫламӗш организацисем политзанятти пулмали кун комсомолецсен пурин те пӗр сменӑра ӗҫлессине, йе занятине пыма услови туса парассине йӗркелемен. Ку та ӗҫре пысӑк ӑрмав кӳрет.

Калас пулать, комитет членӗсем, хӑйсем пример кӑтартас выранне, вӗсем ырӑ мар тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Акӑ комитет членӗ Софронов политзаняттине те, пухусене те йӗркеле ҫӳремест. Вишневски те час-часах пухусенче пулмасть. Кусенчен курса, ытти комсомолецсем те занятине пымаҫҫӗ.

Комсомол Ҫӗмӗрле райкомӗ предприйатисенчи комсомол организацисен ӗҫӗсене сахал тӗрӗслет. Райкомолта ӗҫлекенсенчен ҫак йулашки 2—3 уйӑх хушшинче комбинатра пӗри те пулман.